1938 НОЙАБӖР 5 ШАМАТКУН 256 (5069) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухат̆ ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци ҫекретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—0—85, йалхуҫалӑх пайӗн — 4—97, советсен пайӗн—0—88, промышлӗннӑҫ пайӗн—7—97, йалкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӑн — 6—23.

Кӗрешӳпе ҫӗнтерӳсен лозунгӗсем

Ӗнер „Правда“ хаҫатра ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ Окт̆абӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ Револљуци пулни XXI ҫул тултарнӑ тӗле кӑларнӑ лозунгсене пичетлесе кӑларнӑ. Вӗсем—КӖРЕШӖВӖН ҫулӑмлӑ лозунгӗсем, вӗсем совет халӑхне социалисӑмӑн пысӑкран та пысӑк ҫитӗнӗвӗсене нумайлатса пыма чӗнеҫҫӗ. Вӗсем—ҪӖНТЕРӲСЕН хаваслӑ лозунгӗсем, мӗншӗн тесен, вӗсенче болљшевисӑм кӗрешсе илнӗ историлӗ ӗҫсем курӑнса тӑраҫҫӗ. Вӗсем Ленин—Сталин партийӗн лозунгӗсем, унӑн чӗнӗвӗсем, вӗсене етемлӗхӗн пӗтӗм тӗнчипе коммунисӑм ҫӗнтерсе илесси патне илсе пыракан, малта тӑракан идейӑсем вырнаҫнӑ.

Окт̆абӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ револљуци етем обшчӗствин аталанӑвӗнче ҫӗнӗ самана пуҫласа йачӗ. Тӗнчен улттӑмӗш пайӗнче чуралӑхпа ирӗксӗрлӗх сӑнчӑрӗсене, пусмӑрпа правасӑрлӑх государствине ҫӗмӗрсе пӑрахнӑ ирӗклӗ те мӑн кӑмӑллӑ етем ҫӗнтерчӗ. Совет Сойузӗ, хӑйӗн кӗрешсе илнӗ социалисӑмлӑ аслӑ ҫӗнтерӗвӗсемпе, капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенчи пролетарисене, пӗтӗм ӗҫҫыннисене хӑйсен вӑйне ӗненме шанӑҫ парат̆. Урса кайнӑ буржуази, хӑй пуҫ пулса тӑрассине, експлоататӑрсен стройӗ пурпӗрех пӗтмели сехет ҫитессине чӑсас шутпа хӑйӗн йулашки вӑйне—фашисла ордӑсене хута йарат̆. Анчах реакцин хура вӑйӗсем револљуципе прогресӑн ӳссе пыракан вӑйӗсем умӗнче чӑтса тӑраймӗҫ! Испанири геройла халӑх алла хӗҫпӑшал тытса хӑйӗн ирӗклӗхӗшӗн шалти тата тулашри фашисӑма хирӗҫ кӗрешет. Аслӑ Китай халӑхӗ хӑйӗн ирӗклӗхӗшӗн Йапони захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешет. Халӑх фрончӗ фашисӑма хирӗҫ тӑрат̆. „Фашисӑм вӑл—капиталиссемпе помешчиксен рабочисене, хресченсене тата ӗҫ интеллигенцине хирӗҫле терророла политики. Фашисӑм вӑл—йут ҫӗрсене туртса илессишӗн пыракан вӑрҫӑ. Фашисӑм — тӗнчери халӑхсен ирӗклӗхӗн тата никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассин чи хайар тӑшманӗ. Фашисӑма хирӗҫ кӗрешме пӗтӗм вӑйсене мобилизацилер!“ (ПСК(б)П Тӗпкомӗн лозунгӗсенчен).

Фашисӑм етем йахне империалисӑмлӑ иккӗмӗш вӑрҫа тӗксе кӗртрӗ, фашисӑм пӗтӗм ӗҫҫыннисен тӑван ҫӗршывӗ пулса тӑракан ҫӗршыва—Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑсен Сойузне хирӗҫ хӗҫ хӑйрат̆. Анчах Совет Сойузӗ йунанисенчен хӑрамаст̆, вӑл вӑрҫӑ чӗртсе йама пӑхаканьсем ҫапма тӑнине хирӗҫ хӑй ҫапнипе ответлеме хатӗр! Аслӑ Окт̆абӗр Револљуци кӗрешсе илнисен хуралӗнче пирӗн тӑван, никам ҫӗнтерейми Хӗрлӗ Ҫар—Совет Сойузӗнчи мирлӗ ӗҫӗн хӑватлӑ тӗрекӗ, Тинӗс-ҫар флочӗ—пирӗн ҫӗршывӑн тинӗс чиккисен шанчӑклӑ хуралӗ, Сывлӑш-ҫар флочӗ — тӑшмана сывлӑшран вилӗм кӳрекен сталинла авиаци—тӑраҫҫӗ. Йапони генералӗсем совет ҫӗрӗ ҫине тапӑнма хӑйса пӑхсан, вӗсем хӑйсен ҫурӑмӗсем ҫинче пирӗн ҫар хӑвачӗн вӑйӗсене туйса илчӗҫ. Хӗрлӗ Йалавлӑ пӗрремӗш Уйрӑм ҫар империалисла авант̆урисене хайар та вӗрентмеле урок туйантарчӗ. „Хӗрлӗ Йалавлӑ пӗрремӗш Уйрӑм ҫарӑн мухтавлӑ боецӗсене, командирӗсемпе политработникӗсене—Совет Приморйине хӳтӗлекенсене паттӑрла салам!“ (ПСК(б)П Тӗпкомӗн лозунгӗсенчен).

Мораљпе политикӑ тӗлӗшӗнчен ҫирӗп пӗрлӗхлӗ пулнипе, Ленин—Сталин парти тавра таччӑн пӗтӗҫсе тӑнипе вӑйлӑ Совет халӑхӗ, хӑй кӗрешсе илнисене, Сталинла Конституцире ҫырса хунӑ ҫӗнтерӳсене никама та парас ҫук. Патриотисӑм, тӑван ҫӗршыва, Ленин—Сталин партине чӗререн йуратни—ҫаксем вӗсем никам ҫӗнтерейми вӑйсем, хамӑр ҫӗршывра массӑлӑ героисӑм ҫуратса кӑларакан вӑйсем. Ҫак иртнӗ кунсенчех-ха совет халӑхӗн чаплӑ хӗрӗсем—Велентинӑ Гризодубӑвӑ, Полинӑ Осипенко, Маринӑ Расковӑ, — хӗрарӑмсенчен чи пирвай Совет Сойуз Геройӗсен ҫемйине кӗнӗ висӗ хӗрарӑм,—Ленин—Сталин партийӗ ҫитӗнтернӗ совет патриочӗсем мӗн тума пултарнине тата тепӗр хут кӑтартрӗҫ. Геройсен халӑхӗ никам ҫӗнтерейми халӑх!

Чаплӑ вӗҫевҫӗсем—Гризодубӑвӑ, Осипенко, Расковӑ йулташсем совет хӗрарӑмӗ тӗлӗнмеле ӳснине кӑтартрӗҫ. Епӗр хӗрарӑмсене Совет Сойуз Геройӗсем хушшинче те, ӗҫ геройӗсем—савӑтсемпе уйхир стаханӑвҫисем хушшинче те куратпӑр, вӗсене епӗр государствӑ управленинче те, ҫӗршыв хуҫалӑхӗпе куљтурӑ ӗҫӗсен управленинче те куратпӑр. Ҫакна кӑтартакан тепӗр тӗслӗх—пӑравус машинисӗ пулнӑ Зинаидӑ Троицкайа йулташа Мускав таврашӗнчи чукунҫул начаљникӗ вырӑнне лартни ҫинчен пайан пичетлесе кӑларакан пӗлтерӳ.

Совет Сойузӗ Окт̆абӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ Револљуцин XXI-мӗш уйавне мирлӗ ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе — хӑватлӑ индустрипе, тӗнчери чи шултра йалхуҫалӑхӗпе, ССРС халӑхӗсен чечекленсе сарӑлнӑ куљтурипе, наукӑра, техникӑра, искусствӑра ҫитӗнӳсем тунипе ҫитет. Епӗр малашне те социалисӑмлӑ економикӑна тӗреклетсе пырӑпӑр. ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ рабочисемпе работницӑсене, инженерсемпе техниксене ҫӗрӗкмӑрӑк, нефт̆, металл ытларах кӑларассишӗн, хамӑрӑн халӑх хуҫалӑхне вӑйлатас ӗҫре никӗс пулса тӑракан лайӑх машинӑсене вӑхӑтра кӑларассишӗн, Хӗрлӗ Ҫара малашне те ҫӗнӗ техникӑпа хӗҫпӑшаллантарса пырассишӗн, хамӑр ҫӗршыв гражданӗсем валљи нумайрах та лайӑхрах пахалӑхлӑ ҫитцӑ, пурҫӑн, сукна, трикотаж, атӑ-пушмак кӑларассишӗн кӗрешме, колхозсене малашне те тӗреклетсе пырассишӗн, ҫимӗҫсем ытлашшипех кӑлармала тӑвассишӗн, куљтурӑра ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн кӗрешме чӗнет.

Ленин—Сталин партийӗ совет ҫыннисен пурнӑҫ условисене лайӑхлатас тӗлӗшпе пӗрмайах тӑрӑшат̆. Тӳррӗмех халӑха мӗн кирлине парас тӗлӗшпе ӗҫлекен аппарата парти пысӑккӑн хаклат̆, ун ҫине пысӑк шанчӑксем хурат̆. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ ПСК(б)П Тӗпкомӗ Советӑн государствӑ суту-илӳвӗпе кооперативлӑ суту-илӳн работникӗсене ҫапла чӗнсе калат̆: „Совет потребителне мӗн кирлине лайӑхрах парса тӑрассишӗн, хулари тата йалти куљтурӑлӑ совет суту-илӗвӗшӗн кӗрешӗр!“ Парти совет учрежденисенчи служӑщчисене чӗнет: „Государствӑ дисциплинине ҫирӗплетессишӗн, совет саккунӗсене тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пырассишӗн, ӗҫҫыннисен ыйтӑвӗсене, вӗсене мӗн кирлине кӑтартулӑн пурнӑҫа кӗртсе пырассине туса ҫитерӗр!“

Совет служӑщчийӗсем, совет интеллигенцийӗ вӑл—пирӗн государствӑра пысӑк вӑй. Совет служӑщчийӗсем вӗсем—рабочисемпе хресченсен государствин аппарачӗ. Пирӗн строительствӑн пӗтӗм облӑҫӗсене йертсе пыракан кадрсем вӗсем — совет интеллигенцийӗ. Интеллигенци вӑл—аслӑ совет халӑхӗн пӗр пайӗ, совет ҫӗрӗн чи хаклӑ пуйанлӑхӗ. Окт̆абӗр лозунгӗсенче Сталинла Тӗп Комитет хамӑрӑн совет интеллигенцине, халӑх интеллигенцине сывлӑх сунат̆, ӑна политикӑлӑ воспитани тата болљшевикла ҫирӗплӗх парас ӗҫ ҫине ытларах тимлӗн пӑхма чӗнет. Совет интеллигенчӗсем, пирӗн кадрсем, марксисӑм-ленинисӑм теорине тӗплӗн вӗренсе ҫитсе, коммунисӑм тӑшманӗсене хирӗҫ кӗрешес ӗҫре хӑйсене кирлӗ тавҫӑрулӑх вӑйне илеҫҫӗ, обшчӗствӑлӑ аталану ҫинчен пӗлӳ, идейӑлӑ хӗҫпӑшал илеҫҫӗ.

Мухтавлӑ совет разведки шпионсемпе ҫынвӗлерекенсен фашисла бандине тӑрӑшыв ҫине кӑларчӗ. „Совет разведки — Совет халӑхӗн тӑшманӗсен хӑрушӑ хӗҫпӑшалӗ, социалисӑмлӑ револљуцин вичкӗн хуралӗ ӳстӗр те ҫирӗплентӗр!“ Ҫакӑн ҫинчен асра тытса тӑрар: капиталисӑмлӑ йӗритавралӑх пур чухне, вӑл хӑйӗн агенчӗсене пирӗн тыла йама пӗрмайах тӑрӑшат̆. Ҫавӑнпа та пирӗн йалавсем ҫинче ПСК(б)П Тӗпкомӗн ҫак лозунгӗ: „Халӑх тӑшманӗсене—троцкисла-бухаринла тата буржуалӑ-националисла шпионсемпе сӑтӑрҫӑсене, йут ҫӗршывсенчи разведкӑсене, тара кӗрӗшнӗскерсене тӗппипех пӗтерӗр! Тӑван ҫӗршыва пӑрахса тӑшмана сутӑнакансене вилӗм!“

Окт̆абӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ револљуци XXI ҫул тултарас умӗн пирӗн ҫӗршыв хӑйӗн йуратнӑ ачи—Ленинла Комсомол XX ҫул тултарнине уйавларӗ. Пайан епӗр 1938 ҫулти окт̆абӗрӗн 29-мӗшӗнче ПСҪЛКС Тӗпкомӗн чаплӑ пленумӗнче ПСК(б)П Тӗп Комитечӗн ҫекретарӗ Жданӑв йулташ каланӑ сӑмаха тата ПСҪЛКС Тӗпкомӗн ҫекретарӗ Косарӗв йулташ тунӑ доклада пичетлесе кӑларатпӑр. Ҫак выступленисенче комсомол умӗнче тӑракан пит пысӑк задачӑсем ҫинчен, уйрӑмӑнах ҫамрӑксене идейӑлӑ воспитани парас ӗҫри, кадрсене теори тӗлӗшӗпе пиҫӗхтерес ӗҫри задачӑсем ҫинчен каласа панӑ. „Малти револљуцилӗ теорине—марксисӑм-ленинисӑма вӗренсе алла илни пирӗн практикӑра ӗҫлекен работниксене никам ҫӗмӗрейми вӑй парат̆, хӑйсен ӗҫӗсене ӗненсе-шанса туса пыма вӗрентет. Болљшевисӑма вӗренсе алла илни пирӗн кадрсене вӗсене истори мӗнле ҫулӗ вырӑна лартнине ӑнланса илме пулӑшат̆. Вӗсем совет гражданинӗн, совет работникӗн аслӑ мухтавӗпе чысне ӑнланса илеҫҫӗ тата ӗненеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен хакне тата тӑшманӑн чӑн-чӑн хакне пӗлсе тӑрӗҫ, ҫакна ӑнланса илӗҫ: ҫав пӗтӗм фашисла-шургвардиле ирсӗрсем,—вӗсем вӗт совет комсомолӗцӗн ура подметкине те тӑмаҫҫӗ“. (Жданӑв). Комсомол речӗсене идейӑлӑ хӗҫпӑшаллантарни, комсомолри тӑшмансен йулашкине пӗтерни, ҫӗнӗ кадрсене йертсе пыракан вырӑнсене лартса пыни комсомола социалисӑм строительствин тата ҫӗршыв оборонин пур участкисенче те тата ытларах пуҫарулӑ, тата ытларах дисциплинӑлӑ тӑват̆.

Совет Сойузӗнчи халӑхсем болљшевикла руководствӑпа утса тухнӑ кӗрешӳсемпе ҫӗнтерӳсен ҫулӗ ҫине аслӑ хаваслӑхпа ҫавӑрӑнса пӑхаҫҫӗ. Вӗсем ыранхи кун ҫине лӑпкӑн та шанчӑклӑн пӑхаҫҫӗ, мӗншӗн тесен, вӗсен авангардӗнче ҫапӑҫусенче пулса пиҫӗхнӗ тӗреклӗ те шанчӑклӑ ҫулпуҫӗ—Ленин—Сталин партийӗ пур. Сывӑ пултӑр Пӗтӗм Сойузри Коммунисен (болљшевиксен) Партийӗ—ССР Сойузӗнчи ӗҫҫыннисен малти отрйачӗ! Сывӑ пултӑр Марксӑн—Енгељсӑн—Ленинӑн—Сталинӑн никам ҫӗнейми аслӑ йалавӗ! Сывӑ пултӑр ленинисӑм!

(„Правда“ умстатйи, нойабӗрӗн 5-мӗшӗ).

Патша Российӗ халӑхсен тӗрми пулнӑ. Совет ҫӗршывӗнче пӗртан пӗр равалӑ халӑхсен аслӑ сойузӗ ӳссе тӗрекленет. Сывӑ пултӑр ССР Сойузӗнчи халӑхсен тӑванлӑ сойузӗ тата аслӑ туслӑхӗ!

(ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ Окт̆абӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ револљуци 21 ҫул тултарнӑ тӗле панӑ лозунгсенчен)

Англи парламентӗнчи пренисем

ЛОНДАН, нойабӗрӗн 2-мӗш. Обшчинӑсен палатинчи пренисенче чи малтан либералсен лидӗрӗ Синклӗр тухса каланӑ. Синклӗр ҫапла каланӑ: „Чемберлен, тӳрӗлӗх ҫинчен тата самоопределени ҫинчен калаҫа-калаҫа, татах нумай пиншер чехсене, нимӗҫсене тата йеврейсене тӑван ҫӗршывӗсенчен тухса тармала туса хучӗ, ытти пиншер ҫынсене концентрацилӗ лагӗрсене хуса кӗртрӗ, вӗсене тирансен аллине пачӗ. Австрире, Чехословакире тата Испанире мирлӗ пурнӑҫ туса хурас тенӗ сӑлтавпа, епӗр утӑм хыҫҫӑн утӑм кайала чакса, тӗнчере пуҫ пулса тӑрассин уҫҫине Наполеонран вара пулнӑ чи агреҫҫивлӑ тирансен аллине парса пыратпӑр“.

Унтан Синклӗр ҫапла ыйтнӑ: „Чехословакине панӑ гарантине мӗнлӗ майпа пурнӑҫа кӗртме шухӑшлаҫҫӗ? Чехословакине тӗрӗс-тӗкел тытӑнса тӑмала тӑвас ӗҫе Совет Сойузне йавӑҫтарас тӗлӗшпе кирлӗ ӗҫсем тӑваҫҫӗ-и?“

Малала каласа, Синклӗр ҫапла каланӑ: йулашки ернесенчи событисем фашисла диктатӑрсен тусӗсене киревсӗр ӗҫсем тума тӗкеҫҫӗ, Великобританин авторитетне, ҫавӑн пекех демократи ӗҫне пысӑк сийен кӳчӗҫ, тенӗ. Синклӗр Итали салтакӗсене Испанирен йӑлтах илсе кайма ыйтнӑ. Малала вӑл Китайа укҫа-тенке парса пулӑшма чӗннӗ, вӑрҫӑ материалӗсене Китайа Франци Индо-Китайӗ урлӑ турттарса пырас ыйтусем пирки Йапони каланисенчен Францишӗн йавӑр положени пулса тӑрсан, Англи правительствин Францийе хӳтӗлес пулат̆, тенӗ.

Правительствӑ политики, тенӗ Синклӗр малала, мир политики мар. Ку вӑл—кайала чакса пымали политикӑ, хамӑра ҫӗмӗрмеле тӑвакан политикӑ. Правительствӑ хӑй хыҫҫӑн ӗҫлемеле пулас ҫынсемшӗн йавӑр услови туса хурат̆, вӑл ҫынсен йе вӑрҫӑ ҫулӗ ҫине тӑмала пулат̆, йе пӗтӗмӗшпех диктатӑрсене пӑхӑнмала пулат̆. Унтан Синклӗр Англипе Америкӑ хушшинче суту-илӳ догӑварӗ тума, Францийе укҫа-тенкӗпе тата економикӑ тӗлӗшӗпе пулӑшу пама, ССР Сойузӗ тӗлӗшпе туслӑ политикӑ тытса пыма ыйтнӑ.

Унтан консерватӑр Бутби тухса каланӑ, вӑл снабжени министерстви туса хурассишӗн тӑнӑ. Германи дейательсем нумайах пулмаст̆-ха Германин ҫар хӑвачӗ ҫинчен каланисем пирки сӑмах тапратса, Бутби ҫапла каланӑ: ҫавӑн пек сӑмахсене итленӗ май, епӗр пӗтӗм вӑйа хурса хӗҫпӑшалланассинчен пуҫне урӑх нимӗн ҫинчен шухӑшлама та пултараймастпӑр, тенӗ.

Малалахи пренисене нойабӗрӗн 3-мӗшне куҫарнӑ.

Ллойд Джордж калани

ЛОНДАН, нойабӗрӗн 2-мӗш. Чемберлен, обшчинӑсен палатинче лейбориссен лидӗрӗ Еттли тухса каланӑ сӑмах пирки ответлесе, ҫапла каланӑ: „Хӑйсен ҫӗршывӗн ӗҫӗсем начарри ҫинчен пӗтӗм тӗнчене пӗлтерес шутпа пур майсемпе те усӑ куракан ҫынсен пур тӗрлӗ сӑмахӗсене хирӗҫ епӗ татӑклӑн протеслетӗп. Фашисла государствӑсене хӑйсен начар ӗҫӗсем ҫинчен каланӑшӑн шӑпах ӗнтӗ ӳпкелеме ҫук“.

Чемберленӑн ҫак асӑрхаттарӑвӗ пирки Ллойд Джордж пайан ҫакна пичетлесе кӑларнӑ: „Премйер-министр хӑйӗн сойузникӗсен йӑлисене вӗренсе пынӑ пек туйӑнат̆ мана. Есӗр правительствӑна критиклесен, сире хамӑрӑн ҫитменлӗхсем ҫинчен пӗлтеретӗр, тесе айӑпласҫӗ, ку йапала ӗнтӗ демократишӗн, паллах Англи демократишӗн, ҫӗнӗ „ҫитӗнӳ“ пулса тӑрат̆. Чемберлен, Германире ҫапла тӑвасси пулман пулӗччӗ, терӗ. Паллах, унта ку вӑл пулман пулӗччӗ. Германире унта нимӗнле критикӑ тума та памаҫҫӗ. Есӗр унта ҫакнашкал ӗҫ тунӑ пулсан, сире изменник вырӑнне хурса йе концентрациле лагӗре хупса хураҫҫӗ йе пуҫа касса татаҫҫӗ. Ҫак ӗнтӗ, премйер-министр шухӑшӗпе, демократилӗ правительствӑ идеалӗ пулат̆-шим?“

Турци президенчӗ Кемаљ Атат̆урк каланӑ сӑмах

АНКАРА, нойабӗрӗн 2-мӗш. Парламента уҫнӑ чух Турци премйерӗ Джелал Байар Турци республикӗн президенчӗн, Кемаљ Атат̆уркӑн сӑмахне вуласа панӑ. Тулашри политикӑ ҫинчен каланӑ вырӑнта Кемаљ Атат̆урк ҫапла каланӑ: „Пирӗн мирлӗ политикӑн тӗллевӗ—хамӑр государствӑн хӑватне вӑйлатасси, ӑна кӗтмен ҫӗртен пулма пултаракан тӗрлӗрен ӗҫсем валљи хатӗр тытса тӑрасси. Икӗ государствӑ пӗр-пӗринпе тунӑ килӗшӳсемпе сойузсем хӑйсене уйрӑмӑн йе пӗтӗм государствӑсем пӗр-пӗринпе тунӑ килӗшӳсемпе сойузсем хӑйсене уйрӑмӑн саманана йӑлтах мирлӗ тытса тӑма пултараҫҫӗ тесе шутламастпӑр епӗр. Епӗр кашни халӑх ҫав икӗ тӗслӗ килӗшӳсемпе сойузсенчен кашнинех тума тивӗҫ, тесе шутлатпӑр, вӗсене ҫӗршывӑн географилӗ тата политикӑлӑ уйрӑмлӑхӗсене шута илсе тӑвас пулат̆. Турци ҫак принципа усӑ курчӗ, хӑйӗн кӳршисемпе, ҫаплах ытти государствӑсемпе те туслӑ хутшӑнусемпе сойузсем туса хума пултарчӗ“.

Малала президентӑн сӑмахӗнче Турци йулашки ҫул хушшинче тӗрлӗрен государствӑсемпе економикӑлӑ тата суту-илӳ концеҫҫийӗсем, килӗшӳсем туни ҫинчен каланӑ.

ССР Сойузӗпе Турци хушшинчи хутшӑнусем ҫинчен Кемаљ Атат̆урк ҫапла калат̆:

„Хамӑрӑн аслӑ кӳршӗпе, туспа—ССР Сойузӗпе—епӗр пӗлтӗр, икӗ йенӗ те пухнӑ опыт тӑрӑх, ҫӗнӗрен чикӗ килӗшӗвӗ туса алӑ пуснӑ. Епӗр ҫак килӗшӳ часах ӗҫе кӗрессине кӗтсе тӑратпӑр“.

Чехословакине ҫӗнӗрен пайласа уйӑрни

Венгри территорисем пама ыйтнисене Чехословаки правительстви пӗтӗмӗшпе пурнӑҫа кӗртме килӗшмен хыҫҫӑн, Венгри правительстви Чехословаки правительствипе калаҫма пӑрахнӑ. Чехословаки территорийӗсене Венгрийе парасси ҫинчен тӑракан ыйтӑва татса пама арбитражлӑ комиҫҫине панӑ. Вӑл комиҫҫине: Германи, Итали, Чехословаки, Венгри правительствисен представителӗсем, Словакин тата Закарпат Украинин автономлӑ правительствисен представителӗсем кӗнӗ.

Нойабӗрӗн 2-мӗшӗнче ҫак комиҫҫи решени йышӑннӑ. Вӑл решени тӑрӑх Словакин пӗтӗм кӑнтӑр пайӗ тата кӑнтӑрхӗвелтухӑҫ пайӗ, Закарпат Украинин кӑнтӑр йенчи тӳрем вырӑнӗ Венгри аллине куҫат̆. Ҫак районсене Венгрийе парас ӗҫе нойабӗрӗн 5-мӗшӗпе 10-мӗш хушшинче тӑваҫҫӗ. „Арбитрсем“ Чехословакин Венгри ҫумне пӗрлештернӗ районсенчи пӗтӗм оборудованийӗсене, чӗртаварсене, тавар запасӗсене те Венгрийе памала тӑвассишӗн тӑрӑшма та манса хӑварман.

Германипе Италин „арбитражлӑ“ комиҫҫийӗ йышӑннӑ решени Чехословаки правительствинчи ҫынсене пит те тӗлӗнтерсе, кӳрентерсе пӑрахнӑ, мӗншӗн тесен, вӗсем Венгри требованийӗсемпе Германи килӗшнӗ тесе шанса тӑнӑ пулнӑ.

Ун вырӑнне вара Чехословакине тепӗр хут ҫаратса тустарнишӗн Пољшӑ савӑннӑ. „Арбитражлӑ комиҫҫин“ решенине ырласа хакласа, Пољшӑ хаҫачӗсем: Закарпат Украинин ытти пайне те часах Венгри ҫумне пӗрлештерӗҫ, тесе шанса ҫыраҫҫӗ.

(ТАСС).

„Москва“ самољот вӗҫевӗн организатӑрӗсене наградӑлани

Вӗҫеве организацилес йенӗпе кӑтартулӑ ӗҫленӗшӗн тата „Москва“ самољотӑн материаљнай чаҫӗсене лайӑх хатӗрленӗшӗн ССР Сойуз Верховнӑй Совет Президиумӗ 1938 ҫулти нойабӗрӗн 3-мӗшӗнче кӑларнӑ Указ тӑрӑх 39 №-лӗ савӑтри инженерсене, конструктӑрсене тата маҫтӑр-стаханӑвҫсене—пурӗ 19 ҫынна ССРС орденӗсемпе наградӑланӑ.

„Ӗҫлӗх Хӗрлӗ йалав“ орденӗпе 7 ҫынна, „Знак Почта“ орденӗпе 12 ҫынна наградӑланӑ. (ТАСС).

Ҫӗрулми хатӗрлевӗ

Ӑнлантарулӑ ӗҫе вӑйлатни кирлӗ

Хӗрлӗ Чутай районӗ государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене ҫултан ҫул тултармасӑр тӑрат̆. Кӑҫал та ҫӗрулми хатӗрлессипе кайа йулнӑ. Окт̆абӗрӗн 30-мӗшне колхозниксемпе йединоличник хуҫалӑхӗсем йенӗпе плана 6,4 процент, колхозсем 75,4 процент ҫеҫ пурнӑҫа кӗртнӗ. Район пайанччченех государствӑна тырӑ, аш-какай, ҫӑм парса татман.

Хатӗрлев планӗсене тултарасси йулса пыни—вӑл чи малтан Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн районри уполномоченнайӗ (Љабуков) начар ӗҫленинчен килет. Районри уполномоченнайӑн кашни йалсоветра пекех хӑйӗн агенчӗсем лараҫҫӗ, анчах, тӗрӗссипе каласан, вӗсем ним те ӗҫлемеҫҫӗ.

Колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене вӑхӑтра тултарассишӗн массӑлӑ-политикӑлӑ ӗҫе пачах туса пымаҫҫӗ. Ку ӗҫе йалсоветсенчи хатӗрлев ҫекцисене, актива хутшӑнтарман. Ӑнлатарулӑ ӗҫе сарса пырас вырӑнне административлӑ йӗркесемпе усӑ кураҫҫӗ.

Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн Хӗрлӗ Чутай районӗнчи уполномоченнайӗн хӑйӗн ӗҫне ҫӗнетме вӑхӑт.

И. Лысӑв.

Активиссем хӑйсем те ҫӗрулми парса татман

ЙӖПРЕҪ. (Телефон тӑрӑх). Нойабӗрӗн 1-мӗшне Йӗпреҫ районӗ ҫӗрулми хатӗрлев планне 44 процент ытларах ҫеҫ тултарнӑ. Пайанхи куна уйрӑм колхозсенче ҫӗрулми парса татнӑ пулсан, Кирӑв, Ворошилӑв йачӗсемпе тӑракан колхозсем питӗ кайа йулнӑ. Хӑшпӗр йалсоветсенче активиссем хӑйсем те ҫӗрулми парса татман. Акӑ, Чӑваш Тимӗш йалсовет предҫедателӗ Михайлӑв, „Болљшевик“ колхоз предҫедателӗ Йегорӑв йулташсем хӑйсем те государствӑна ҫӗрулми паман. Ҫакӑн хыҫҫӑн, ӑҫтан вӗсем колхозниксем хушшинче ҫӗрулми хатӗрлев планне тултарса ҫитерессишӗн агитаци тума пултарччӑр? Ку ыйтупа районри организацисем те интересленмен.

Хатӗрленӗ ҫӗрулмирен Мускава тийесе йамали плана 22 процент ытларах ҫеҫ тултарнӑ.

Андрийанӑв.

1938 ҫулшӑн государствӑна ҫӗрулми тӑратмали плана тултарнине кӑтартакан СВОДКӐ

(Нойабӗрӗн 4-мӗшне процентпа)

1.	Улатӑр	79,3	процент
2.	Елӗк	85,8	—„—
3.	Патӑрйел.	39,7	—„—
4.	Вӑрнар	71,8	—„—
5.	Йӗпреҫ	48,7	—„—
6.	Ишлей	55,0	—„—
7.	Канаш	38,1	—„—
8.	Куславкка	46,2	—„—
9.	Хӗрлӗ Чутай	32,7	—„—
10.	Кувакинӑ	33,1	—„—
11.	Сӗнтӗрвӑрри	55,2	—„—
12.	Пӑрачкав	30,0	—„—
13.	Турхан.	56,3	—„—
14.	Тутаркас	90,2	—„—
15.	Трак	53,0	—„—
16.	Вӑрмар	34,7	—„—
17.	Ҫӗрпӳ	41,5	—„—
18.	Шупашкар	63,5	—„—
19.	Шӑмӑршӑ	33,8	—„—
20.	Шӑхасан	73,0	—„—
21.	Шӑнкӑртам	78,3	—„—
22.	Ҫӗмӗрле	58,0	—„—
23.	Йетӗрне	61,1	—„—
24.	Йелчӗк	79,7	—„—
25.	Тӑвай	69,9	—„—

Республикӗпе 53,6 процент.

Обйазательствӑсене тултарнӑ

ЙЕЛЧӖК. Турханти „Звезда“ колхоз государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене пӗтӗмпех тултарнӑ. Окт̆абӗрӗн 30-че колхозниксем ҫӗрулми хатӗрлев планне тултарчӗҫ. Унчен икӗ кун маларах кӗрхи ҫӗртме сухине туса пӗтернӗ.

Колхозниксем уйава пысӑк хаваслӑхпа кӗтеҫҫӗ.

Н. Фомин.

Кӗрхи ҫӗртме

Кӗрхи ҫӗртме планне 80 процент ҫеҫ тултарнӑ

Нойабӗрӗн 1-мӗшне Чӑваш республикӗ тӑрӑх кӗрхи ҫӗртме сухине 224.463 гектар туса, плана 80,2 процент тултарнӑ.

Республика иртнӗ пилӗккунлӑхра малтанхинчен лайӑхрах ӗҫлерӗ. Уйрӑм районсем (Ишлей, Тӑвай, Сӗнтӗрвӑрри, Шупашкар, Хӗрлӗ Чутай) пилӗк кун хушшинче 12—26-шар процента ҫитиччен ӳсӗм турӗҫ. Ишлей, Сӗнтӗрвӑрри тата Шупашкар районӗсенче Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫумӗнчи комсомол организацийӗн бригадисем ӗҫленӗ. Бригадӑпа кайнӑ комсомолӗцсем кӗрхи ҫӗртме сухине хӑвӑртлатма районсенчи организацисене пысӑк пулӑшу панӑ.

Ҫав вӑхӑтрах хӑшпӗр районсенче кӗрхи ҫӗртме сухи тӑвасси чарӑнса ларнӑпа пӗрех шутланат̆. Акӑ, Елӗк районнех илер. Елӗк районӗ кӗрхи ҫӗртме планне окт̆абӗрӗн 20-мӗшӗччченех 90 процент ытларах тултарнӑ пулнӑ, халљ те, нойабӗрӗн 1-мӗшне, 98 процент ҫинче ларат̆. Йулашки кунсенче районри организацисем кӗрхи ҫӗртме ӗҫӗпе йертсе пырассине вӑйсӑрлатса ҫӗрулми хатӗрлев йенӗпе ҫеҫ ӗҫлеме тытӑннӑ. Йулашки пилӗккунлӑхра Елӗк районӗ кунне, вӑтамӑн илсен, 82-шар гектар ҫеҫ кӗрхи ҫӗртме сухи тунӑ. Кунашкал тӗслӗх ытти районсенче пур.

Акӑ, пӗр кун Абаш колхозне (Шупашкар р.) районран пӗр представител пырат̆ те, лашасене пурне те кӗрхи ҫӗртме тунӑ ҫӗре йамала, тесе хӑварат̆. Ҫав представител хыҫҫӑнах тепӗр представител пырса кӗрет. Иккӗмӗш представителӗ—пӗтӗм вӑйа ҫӗрулми хатӗрлев планне тултарма мобилизацилес пулат̆, пайанах лашасем ҫитнӗ таран ҫӗрулмипе кайма ла, тесе хӑварат̆. Паллах, ҫакӑ ӗнтӗ районри партипе совет организацийӗсем йенчен оперативлӑх ҫитменнинчен пулса пырат̆. Ҫӗрулми те хатӗрлемеле, кӗрхи ҫӗртме те тумала,—иккӗшӗ те хӗрӳлӗ ӗҫсем.

Республикӑра кӗрхи ҫӗртме планне тултарнине кӑтартакан СВОДКӐ

(нойабӗрӗн 1-мӗшне)

Районсен йачӗсем	Плана тултарнӑ (процентпа)	Трактӑрпа ӗҫлемели плана тултарнӑ (процентпа)
Улатӑр	87,4	66,6
Елӗк	98,0	42,0
Патӑрйел	82,6	40,4
Вӑрнар	88,0	56,2
Йӗпреҫ	77,6	60,6
Ишлей	78,5	25,5
Канаш	69,3	31,2
Куславкка	92,0	36,8
Кувакинӑ	74,9	72,[illegible]
Хӗрлӗ Чутай	44,2	—
Сӗнтӗрвӑрри	90,8	61,0
Пӑрачкав	71,5	65,6
Турхан	56,1	—
Тутаркас	82,5	40,0
Трак	70,5	47,8
Вӑрмар	66,9	44,8
Ҫӗрпӳ	98,1	68,5
Шупашкар	65,8	40,5
Шӑмӑршӑ	90,7	79,6
Шӑхасан	78,0	66,6
Шӑнкӑртам	119,0	89,4
Ҫӗмӗрле	75,5	17,0
Йетӗрне	77,2	46,8
Йелчӗк	90,3	74,2
Тӑвай	77,3	66,3
Республикӗпе	80,2	58,9
Окт̆абӗрӗн 25-мӗшне пулнӑ	71,7	—

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин

ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. **КĔСКЕ КУРС.** ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

VII сыпăкăн йулашки

6. Петроградри октăбĕрти восстани тата Вăхăтлăх правительствăна арĕслени. Советсен II-мĕш сиесĕ тата Совет правительствине туса хуни. Советсен II-мĕш сиесĕ мир çинчен, çĕр çинчен йышăннă декретсем. Социалисăмлă революци çĕнтерни. Социалисăмлă революци çĕнтернин сăлтавĕсем.

Большевиксем восстанине вăйлăн хатĕрленме пуçланă. Ленин: рабочисемпе салтаксен депутачĕсен икĕ столицăри Совечĕсенче те—Мускав тата Петроград Совечĕсенче те ытларахăша илсен, большевиксем государствă влаçне хăйсен аллине илме пултарассĕ тата илмеле те, тесе кăтартса панă. Утса тухнă çула итог туса, Ленин: „Халăхăн ытларахăшĕ пирĕн майлă", тесе паллă тунă. Ленин хăйĕн статйисенче, Тĕп Комитета тата большевикла организацисем патне йанă çырусенче восстани тăвасси çинчен конкретлă план панă, вăл унта: çар чаçĕсемпе, флотпа, красногвардейĕцсемпе мĕнле усă курмали çинчен, восстани ăнăçлă пултăр тесен, Петроградра ĕçе татса паракан мĕнле пунктсене йарса илмели çинчен т. ыт. çырнă.

Октăбĕрĕн 7-мĕшĕнче Ленин вăрттăн Финляндирен Петроградa килнĕ. 1917 çулти октăбĕрĕн 10-мĕшĕнче парти Тĕпкомĕн историлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ, вăл ларура çывăх кунсенчех хĕçпăшаллă восстани пуçласа йарасси çинчен решени йышăннă. Парти Тĕпкомĕн Ленин çырнă историлĕ резолюцинче çапла каланă:

„Тĕпком йышăнат: вырăс революцийĕн пĕтĕм тĕнчери ларутăрăвĕ те (Германи флотĕнчи восстани, вăл пĕтĕм тĕнчери социалисăмлă революци мĕнпур Йевропăра ÿссе пыни пуринчен те çивĕччĕн паларни пулат, тата империалиссен тĕнчи Россиăра революцине пăвса вĕлерес тĕллевпе хăратса тăни), вăрçăлă лару-тăру та (вырăс буржуазийĕ тата Керенскипе унăн компанийĕ Питĕре нимĕçсене пама шут тытнă пирки иккĕленме çук), пролетарилĕ партисем Советсенче ытларахăш илни те,—çаксем пурте хресченсен восстанийĕсене май тата халăх шанăçĕ пирĕн парти йенне çаврăннине май (Мускаври суйлавсем), йулашкинчен, уççăнах иккĕмĕш корниловщинăна хатĕрлени (Питĕртен çарсене илсе тухса кайни, Питĕр патне казаксем илсе пыни, Минска казаксем хупăрласа илни т. ыт.),—çаксем пурте кун йĕркине хĕçпăшаллă восстани кăларса тăратаççĕ.

Çапла вара, хĕçпăшаллă восстани пурпĕрех пулмалине, вăл пулма пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнине йышăнса, Тĕпком партин пур организацийĕсене те çакăн тăрăх ĕçлеме тата пур практикăлă ыйтусене те çак йенчен пăхса сÿтсе-йавма тата татса пама хушат (Çурçĕр облаçĕнчи Советсен сиесĕ, çарсене Питĕртен илсе тухса кайни, москвичсемпе минчансен выступленийĕсем т.ыт.)" (**Ленин**, т. XXI, стр. 330).

Çак историлĕ решенине Тĕпкомăн икĕ членĕ—Камĕнĕвпа Зиновйĕв хирĕç тăнă, вĕсем ăна хирĕç сасăланă. Вĕсем те, меньшевиксем пекех, буржуалă парламентарлă республикă çинчен ĕмĕтленнĕ тата рабочи клас çинчен: унăн социалисăмлă революци тума вăй çук, вăл влаçа илмелĕх ÿссе çитеймен тесе ĕнентерсе, рабочи клас çинчен елекленĕ.

Çак ларура Троцкий тÿрех резолюцине хирĕç сасăламан, анчах та вăл резолюци çумне тÿрлетÿ панă, çав тÿрлетÿ восстанине нимсĕр тăратса хăварса путлантармала пулнă. Вăл Советсен II-мĕш сиесне уçăччен восстани пуçламала мар тесе сĕнÿ панă, çакă вăл—восстани ĕçне вăраха йарас, восстани пулас кун çинчен малтанах пĕлтерсе хурас, çакăн çинчен Вăхăтлăх правительствăна систерсе хурас, тенине пĕлтернĕ.

Большевикла партин Тĕпкомĕ вырăнсенче восстани организацилеме хăйĕн уполномоченнăйĕсене Донбаса, Урала, Гелсингфорса, Кронштадта, кăнтăр-хĕвеланăç фронтне т. ыт. çĕре йанă. Ворошилăв, Молатăв, Дзержинский, Орджоникидзе, Кирăв, Каганович, Куйбышĕв, Фрунзе, Йарославский тата ытти йулташсем вырăнсенче восстанине йертсе пыма партирен йатарласа заданисем илнĕ. Уралта, Шадринскинче, çар çынnисем хушшинче Жданăв й. ĕçленĕ. Хĕвеланăç фронтĕнче, Белоруççире, Йежов й. салтаксен массине восстание хатĕрленĕ. Тĕпком уполномоченнăйĕсем вырăнсенчи большевикла организацисен руководителĕсене восстани тумали планпа паллаштарнă тата вĕсене Петроградри восстанине пулăшу пама мобилизацилĕ хатĕр туса тăратнă.

Партин Тĕп Комитечĕ кăтартса панă тăрăх Петроград Совечĕ çумĕнче **Военно-революционнăй комитет** тунă, вăл восстанин уççăн ĕçлекен штабĕ пулса тăнă.

Çав вăхăтрах контрреволюци те хăйĕн вăйĕсене васкавлăн пухнă. Офицерсем контрреволюцилĕ „офицерсен сойузне" организациленнĕ. Пур çĕрте те контрреволюционерсем ударнăй батальонсем йĕркелес тĕлĕшпе штабсем тунă. Октăбĕр уйăхĕн вĕçне контрреволюцин 43 ударнăй батальон пулнă. Георгийĕвский кавалерсенчен йатарласа батальонсем организациленĕ пулнă.

Керенский правительстви правительствăна Петроградран Мускава куçарасси çинчен ыйту лартнă. Çакăнтан вара правительствă Петроградра восстани пулма парас мар шутпа Петроградa нимĕçсене пама хатĕрленни курăннă. Петроградри рабочисемпе салтаксем протес пани Вăхăтлăх правительствăна Петроградрах йулмала тунă.

Октăбĕрĕн 16-мĕшĕнче парти Тĕпкомĕн аслă ларăвĕ пулса иртнĕ. Çак ларура восстанине йертсе пыма **Партилĕ центр** суйланă, унăн пуçĕнче Сталин йулташ пулнă. Çак Партилĕ центр Петроград Совечĕ çумĕнче Военно-революционнăй комитетăн йертсе пыракан чăмăрĕ пулнă, вăл пĕтĕм восстани ĕçне практикăла йертсе пынă.

Тĕпком ларăвĕнче Зиновйĕвпа Камĕнĕв капитулянтсем каллех восстанине хирĕç тăнă. Отпор илнĕ хыççăн, вĕсем восстанине хирĕç, партине хирĕç пичетре уççăн выступлени тăвас çул çине тăнă. Октăбĕрĕн 18-мĕшĕнче меньшевиксен „Новая жизнь" хаçатĕнче Камĕнĕвпа Зиновйĕв большевиксем восстанине хатĕрленни çинчен, тата вĕсем çав восстание авантюрă тесе шутлани çинчен каланине пичетлесе кăларнă. Çапла вара Камĕнĕвпа Зиновйĕв—Тĕпком восстани çинчен, çывăх вăхăтра восстани организацилесси çинчен йышăннă решенине тăшмансем умĕнче уçса кăтартнă. Çакă вăл тăшмана сутăнни пулнă. Çакна май Ленин çырнă: „Камĕнĕвпа Зиновйĕв хĕçпăшаллă восстани çинчен хăйсен партийĕн Тĕпкомĕ йышăннă решенине Родзйанкопа Керенскине **сутрĕç**". Ленин Зиновйĕвпа Камĕнĕва партирен кăларасси çинчен Тĕпком умне ыйту лартнă.

Предателсем систерсе хунă пирки революцин тăшманĕсем çавăнтах восстанине пулма парас мар тата революцин йертсе пыракан штабне—большевиксен партине çĕмĕрсе тăкас тесе ĕççем тума пуçланă. Вăхăтлăх правительствă вăрттăн лару туса иртернĕ, унта большевиксене хирĕç кĕрешмели майсем çинчен ыйту татса панă. Октăбĕрĕн 19-мĕшĕнче Вăхăтлăх правительствă фронтран Петроградa çарсем васкавлăн чĕнсе илнĕ. Урамсенче вăйлатнă патрульсем çÿреме пуçланă. Контрреволюци Мускавра уйрăмах пысăк вăйсем пухма ĕлкĕрнĕ. Вăхăтлăх правительствăн çакăн пек туса хатĕрленĕ план пулнă: Советсен II-мĕш сиесĕ уçăличчен пĕр кун малтан большевиксен Тĕпкомĕ вырнаçнă Смольнăйа атакă туса йышăнса илмеле те, большевиксен йертсе пыракан центрне çĕмĕрсе тăкмала. Çак шутпа Петроград патне çарсем илсе пынă, правительствă çав çарсем хăй майлă тăрасса шаннă.

Анчах та, Вăхăтлăх правительствă тытăнса тăмали кунсемпе сехетсене, шутласа хунă пулнă ĕнтĕ. Социалисăмлă революцин çĕнтерÿлĕ утăмне нимĕнле вăйсем те чарма пултарайман ĕнтĕ.

Октăбĕрĕн 21-мĕшĕнче большевиксем революцилĕ çар чаçĕсене пурне те Военно-революционнăй комитет комиссарĕсене йанă пулнă. Восстани пуçланаччĕнхи кунсенче çар чаçĕсенче, хапрăксемпе савăтсенче çапăçăва хатĕрленес ĕçсем хĕрÿлĕн пынă. Çавăн пекех çар карапĕсем—крейсĕр „Аврора" тата „Заря свободы" паллă заданисем илнĕ.

Петроград Совечĕн ларăвĕнче Троцкий, вĕçкĕнленсе кайнипе, восстани срукĕ çинчен, большевиксем восстани пуçласа йама тĕллесе хунă кун çинчен тăшмана каласа пĕлтернĕ. Керенский правительствине хĕçпăшаллă восстанине аркатса йама май парас мар тесе, парти Тĕпкомĕ восстанине тĕллесе хунă кунтан малтан—Советсен II-мĕш сиесне уçăччен пĕр кун малтан пуçласа йама тата иртерме йышăннă.

Керенский хăйĕн выступленине октăбĕрĕн 24-мĕшĕнче (нойабĕрĕн 6-че) ирпе ирех большевиксен партийĕн тĕп органне—„Рабочий путь" хаçата хупса лартма приказ кăларнипе тата „Рабочий путь" редакцийĕпе большевиксен типографи çуртĕ патне броневиксем йанипе пуçланă. Анчах та ирхине 10 сехет тĕлне Сталин йулташ кăтартса панипе красногвардейĕцсемпе революцилĕ салтаксем броневиксене хăваласа йанă тата „Рабочий путь" типографипе редакцийĕ патĕнче вăйлă хурал туса хунă. Ирхине 11 сехет тĕлне „Рабочий путь" хаçат: Вăхăтлăх правительствăна **сирпĕтсе антармала**, тесе чĕннипе тухат. Çакăнпа пĕр вăхăтрах восстанин Партилĕ центрĕ кăтартса панипе Смольнăй патне революцилĕ салтаксемпе красногвардейĕцсен отрйачĕсене илсе пынă.

Восстани пуçланнă.

Октăбĕрĕн 24-мĕшĕнче çĕрле Смольнăйа Ленин пырса çитнĕ, вăл восстанине йертсе пырас ĕçе тÿррех хăй аллине илнĕ. Смольнăй патне çĕрĕпех революцилĕ çар чаçĕсемпе Хĕрлĕ гварди отрйачĕсем пырса тăнă. Вĕсене большевиксем столицă центрне—Вăхăтлăх правительствă вырнаçса ларнă Зимний двореца хупăрласа илме йанă.

Октăбĕрĕн 25-мĕшĕнче (нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче) Хĕрлĕ гвардипе революцилĕ çарсем вокзалсене, почтăна, телеграфа, министерствăсене, государствă банкне йышăнса илнĕ пулнă.

Предпарламента салатса йанă.

Петроград Совечĕпе большевиксен Тĕпкомĕ вырнаçса ларнă Смольнăй революцин кĕрешÿ штабĕ пулса тăнă, кунтан кĕрешÿ приказĕсем тухса тăнă.

Çак кунсенче Петроградри рабочисем, большевиксен партийĕ йертсе пынипе, хăйсем лайăх шкул витĕр тухнине кăтартнă. Восстани тума большевиксем ĕçленипе хатĕрленĕ революцилĕ çар чаçĕсем çапăçу приказĕсене пит тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынă тата Хĕрлĕ гвардипе çумма-çумăн тăрса çапăçнă. Тинĕс флочĕ çартан кайа йулман. Кронштадт большевиксен партийĕн крепаçĕ пулса тăнă, кунта ĕнтĕ Вăхăтлăх правительствă влаçне тахçанах йышăнмасăр тăнă. „Аврора" крейсĕр хăйĕн Зимний дворец çине пенĕ аслатилĕ тупă сассисемпе октăбĕрĕн 25-мĕшĕнче çĕнĕ самана—Аслă социалисăмлă революци самани пуçланни çинчен пĕлтернĕ.

Октăбĕрĕн 25-мĕшĕнче (нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче) — большевиксен „Россиăа гражданĕсем патне" йатлă чĕнÿ пичетленсе тухнă. Ку чĕнÿре—буржуалă Вăхăтлăх правительствăна сирпĕтсе антарнă, государствă влаçĕ Советсен аллине куçнă, тесе пĕлтернĕ.

Вăхăтлăх правительствă Зимний двореца йункерсемпе ударнăй бригадăсен хÿттине пытанса ларнă. Октăбĕрĕн 25-мĕшпе 26-мĕш хушшинче çĕрле революцилĕ рабочисем, салтаксемпе матроссем Зимний дворец штурм туса илнĕ те Вăхăтлăх правительствăна арĕсленĕ.

Петроградра хĕçпăшаллă восстани çĕнтернĕ.

Советсен Пĕтĕм Россиăри II-мĕш сиесĕ Смольнăйра 1917 çулти октăбĕрĕн 25-мĕшĕнче (нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче) каçхине 10 сехет те 45 минутра уçăлнă, вăл вăхăтра Петроградра çĕнтерÿлĕ восстани хĕрсе пынă тата влаç чăннипе Петроград Совечĕн аллинче тăнă.

Сиесра чи пысăк ытларахăшĕ большевиксем майлă пулнă. Меньшевиксем, бундовĕцсем тата сылтăм есерсем хăйсен кĕвви пĕтнине курса, сиесран, унăн ĕçне хутшăнма килĕшменни çинчен пĕлтерсе, пăрахса тухса кайнă. Октăбĕр революцине вĕсем, Советсен сиесĕнче вуласа кăтартнă зайавленире: „вăрçăлă загăвăр" тенĕ. Сиес: меньшевиксемпе есерсем сиесран пăрахса тухса кайнăшăн шеллемест çеç мар, тата саламлат, мĕншĕн тесен, предателсем пăрахса кайнипе сиес чăннипех рабочисемпе салтаксен депутачĕсен революцилĕ сиесĕ пулса тăчĕ, тесе питленĕ.

Сиес йачĕпе пĕтĕм влаç Советсен аллине куçни çинчен пĕлтернĕ.

„Рабочисен, салтаксен тата хресченсен калама çук пысăк йышĕ çине тайанса, Петроградра рабочисемпе гарнизонăн çĕнтерÿлĕ восстанийĕ пулса тăни çине тайанса, Сиес влаçа хăй аллине илет",—тенĕ Советсен II-мĕш сиесĕн воззванинче.

1917 çулта октăбĕрĕн 26-мĕшĕнче (нойабĕрĕн 8-мĕшĕнче) çĕрле Советсен II-мĕш сиесĕ **мир çинчен декрет** йышăннă. Сиес вăрçă вăрçакан çĕршывсене пурне те халех мир çинчен калаçса татăлма сахалтан та виçĕ уйăхлăха перемири тума сĕнÿ панă. Вăрçа хутшăннă пур çĕршывсенчи правительствăсемпе халăхсене чĕнсе, сиес çав вăхăтрах тата „етемлĕхĕн чи малта пыракан виçĕ наци тата халыхи вăрçа хутшăннă чи пысăк государствăсен: Англи, Франци, Германи рабочисене" чĕнсе каланă. Вăл çак рабочисене „мир ĕçне, çакăнпа пĕрлех тата ĕççынnисемпе халăхăн експлуатациленекен массисене пур йышши чуралăхпа пур йышши експлуатацирен те хăтарас ĕçе ăнăçлăн вĕçне çитерме" пулăшма чĕннĕ.

Çав каçхинех Советсен II-мĕш сиесĕ **çĕр çинчен декрет** йышăннă, çак декрет тăрăх „çĕр помещиксен харпăрлăхĕнче пулас йĕрке нимĕнле выкупсăр халех пăрахăçа тухат". Çак çĕр саккунĕн никĕсне вырăнсенчи хресченсен 242 наказĕ тăрăх тунă пĕтĕм хресченсен наказне йышăннă. Çак наказ тăрăх çĕр уйрăм харпăрлăхра тăрасси йаланлăхах пăрахăça тухат, ун вырăнне çĕр пĕтĕм халăх, государствă харпăрлăхĕ пулса тăрат. Помещик, удел, мăнастыр çĕрĕсене нимĕн тÿлевсĕр усă курма пĕтĕм ĕççынnисен аллине панă.

Çак декрет тăрăх хресченсем пĕтĕмпе Октăбĕрти социалисăмлă революцирен 150 мĕлйун теçетин ытла çĕнĕ çĕр туйанна, çак çĕрсем малтан помещиксен, буржуази, патша çемйи, мăнастырсен, чиркÿсен аллинче тăнă.

Хресченсем çулсерен помещиксене арендă укçи 500 мĕлйун тенкĕ ылтăнпа тÿлесе тăрассинчен хăтăлнă.

Çĕр айĕнчи мĕнпур пуйанлăхсем (нефт, çĕркăмрăкĕ, руда т. ыт.), вăрмансем, шывсем халăх харпăрлăхне куçнă.

Йулашкинчен, Советсен Пĕтĕм Россиăри II-мĕш сиесĕнче пирвайхи Совет правительствине—Халăх комиссарĕсен советне йĕркеленĕ. Халăх комиссарĕсен советне пĕтĕмпех большевиксенчен тунă. Пирвайхи Халăх комиссарĕсен совечĕн председателне Ленина суйланă.

Çакăн пек вĕçленнĕ Советсен историлĕ II-мĕш сиесĕ.

Делегатсем Петроградра Советсем çĕнтерни çинчен хыпар пĕлтерме тата Совет влаçне пĕтĕм çĕршыв тăрăх сарма вырăнсене саланнă.

Влаç пур çĕрте те харăс мар Советсен аллине куçнă, Петроградра Совет влаçĕ пулса тăнă вăхăтра, Мускавра урамсенче темиçе кун хушши вăйлă та хаяр çапăçусем пынă-ха. Влаçа Мускав Совечĕ аллине куçма парас мар шутпа, меньшевиксемпе есерсен контрреволюцилĕ партийĕсем шургвардейĕцсемпе тата йункерсемпе пĕрле рабочисемпе салтаксене хирĕç хĕçпăшаллă кĕрешÿ пуçласа йанă. Темиçе кун хушши çапăçнă хыççăн тин Мускавра пăлхавçăсене çĕмĕрсе, Советсен влаçĕ туса хунă.

Петроградра хăйĕнче тата унăн хăшпĕр районĕсенче революци çĕнтернĕ хыççăн малтанхи кунсенче контрреволюционерсем Совет влаçне сирпĕтсе антарма хăтланса пăхнă. 1917 çулти нойабĕрĕн 10-мĕшĕнче, восстани вăхăтĕнче Петроградран çурçĕр фронт районне тарса кайнă Керенски казаксен хăшпĕр чаçĕсене пухнă та Петроград çине йанă, çав чаçсен пуçĕнче Краснов генерал пулнă. 1917 çулти нойабĕрĕн 11-мĕшĕнче контрреволюцилĕ организаци—„Комитет спасения родины и революции", есерсем йертсе пынипе, Петроградра йункерсен пăлхавне пуçласа йанă. Анчах та пăлхавçăсене çăмăллăнах çĕмĕрсе тăкнă. Пĕр кун хушшинче, нойабĕрĕн 11-мĕшĕнчи каçала тĕлне, матроссемпе красногвардейĕцсем йункерсен пăлхавне пĕтерсе хунă, нойабĕрĕн 13-мĕшĕнче вара Пулковски высотисем патĕнче Краснов генерала çĕмĕрсе тăкнă. Октăбĕрти восстани вăхăтĕнчи пекех, Совета хирĕçле пăлхава çĕмĕрсе тăкассине Ленин хăй йертсе пынă. Вăл пĕр пăркаланмасăр çирĕппĕн тăни, çĕнтерессине хăйулăн шанса тăни массăсене хавхалантарса тата пĕтĕçтерсе пынă. Тăшмана çĕмĕрсе тăкнă. Краснова тыткăна илнĕ, вăл Совет влаçне хирĕç кĕрешме пăрахатăп, тесе „честное слово" панă. Çак „честное слово" панишĕн ăна ирĕке кăларнă, анчах та, кайарахпа паларнă тăрăх, Краснов хăйĕн генераллa сăмахне пăснă. Керенскине илсессĕн вăл хĕрарăм тумтирĕ тăхăнса, „паллă мар йенеле" тарса пытанма ĕлкĕрнĕ.

Могилевра, çарсен главнокомандуйушчи Ставкинче, Духонин генерал та çавăн пекех пăлхав тума хăтланнă. Совет правительстви Духонина халех Германи командованипе перемири тăвасси çинчен калаçу пуçласа йама хушсан, вăл правительствă хушнине пурнăçа кĕртме килĕшмен. Вара Совет влаçĕн приказĕ тăрăх Духонина вырăнтан кăларнă. Контрреволюцилĕ Ставкăна çĕмĕрсе тăкнă, çавăнпа пĕрлех Духонина ăна хирĕç çĕкленнĕ салтаксем вĕлернĕ.

Совет влаçне хирĕç вылазкă тума парти ăшĕнчи паллă оппортунисссем те: Камĕнĕв, Зиновйĕв, Рыкăв, Шляпникăв т. ыт. хăтланса пăхнă. Вĕсем тин çеç Октăбĕр революцийĕ сирпĕтсе антарнă меньшевиксемпе есерсене хутшăнтарса „пĕр йăхлă-социалисăмлă правительствă" тăвасси çинчен ыйтма пуçланă. 1917 çулти нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче большевиксен партийĕн Тĕпкомĕ резолюци йышăннă, вăл çак контрреволюцилĕ партисемпе килĕшÿ тăвассине сирсе пăрахнă тата Камĕнĕвпа Зиновйĕва революци штрейкбрехерĕсем тесе каланă. Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче, парти политикипе килĕшмен Камĕнĕв, Зиновйĕв, Рыкăв, Милютин Тĕпком составĕнчен тухни çинчен пĕлтернĕ. Çав кунхинех, нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче, Ногин хăй йачĕпе тата Халăх комиссарĕсен советне кĕнĕ Рыкăв, В. Милютин, Теодорович, А. Шляпникăв, Д. Рйазанăв, Йуренĕв, Ларин йачĕпе парти Тĕпкомĕн политикипе килĕшменни çинчен тата çакăнта асăннă çынсем Халăх комиссарĕсен совечĕн составĕнчен тухни çинчен пĕлтернĕ. Хăравçăсен ушкăнĕ тарни Октăбĕр революци тăшманĕсене савăнтарнă. Пĕтĕм буржуазипе ăна пулăшакансем хĕпĕртесе ÿкнĕ, большевисăм саланса кайни çинчен кăшкăрашнă, большевиксен партийĕ пĕтсе ларасси çинчен малтанах каланă. Анчах та таркăнсен ушкăнĕ пĕр минутлăха та парти тĕреклĕхне чакарман. Парти Тĕпкомĕ вĕсене йĕрĕнсе: революци таркăнĕсем тата буржуазине пулăшакансем тесе питленĕ те, хăйĕн черетлĕ ĕçĕсене тума тытăннă.

„Сулахай" есерсене илсен, вĕсем вара, уççăнах большевиксене майлă тăракан хресченсен массисем хушшинчи хăйсен влийанине çухатас мар тесе, большевиксемпе хирĕçес мар, халлĕхе вĕсемпе пĕр фронт тăвас тесе йышăннă. 1917 çулти нойабĕр уйăхĕнче пухăннă хресченсен Совечĕсен сиесĕ Октăбĕрти социалисăмлă революци кĕрешсе илнисене тата Совет влаçĕн декречĕсене пурне те йышăннă. „Сулахай" есерсемпе килĕшÿ тунă тата темиçе „сулахай" есера (Колегайĕв, Спиридонăвă, Прошйан, Штейнберг) Халăх комиссарĕсен совечĕн составне кĕртнĕ. Анчах ку килĕшÿ Брестри мир çине ал пусаччен тата чухăнсен комитечĕсене тăваччен кăна тытăнса тăнă. Ку вăхăт тĕлне хресченсем тарăнăн сийленесси пулса иртсен, „сулахай" есерсем, ытларах та ытларах кулаксен интересне палăртса, большевиксене хирĕç пăлхав çĕкленĕ, Совет влаçĕ вĕсене çĕмĕрсе тăкнă.

1917 çулти октăбĕртен пуçласа 1918 çулти йанвар-февралe çитиччен вăхăтра советлă революци пĕтĕм çĕршыва сарăлма ĕлкĕрнĕ. Совет влаçĕ питех те пысăк çĕршыв территорийĕ тăрăх сарăласси çавтери пысăк хăвăртлăхсемпе пулса пынă, ăна Ленин Совет влаçĕн „триумфальнăй маршĕ" тесе каланă.

Октăбĕрти социалисăмлă аслă революци çĕнтернĕ.

Россиăри социалисăмлă революцине çакăн пек çăмăлтараххăнах çĕнтерме май панă чылай сăлтавсенчен çак тĕп сăлтавсене палăртма кирлĕ.

1. Октăбĕр революци умĕнче ытти çĕршывсенчипе танлаштарсан вăйсăр, начар организациленнĕ, политикă йенчен сахал опытлă тăшман, вырăс буржуазийĕ пулнă. Економикă йенчен тĕрекленсе çитеймен тата пĕтĕмпех правительствă заказĕсене пăхăнса тăнă вырăс буржуазийĕн килсе тухнă ларурăн мĕнле тухмалине тупма политикăла хăйтĕлленлĕх те, пуçарулăх та çителĕклĕ пулман. Унăн пысăк масштабри политикăлă комбинацисемпе политикăла ултавсен опычĕ те пулман, ун пек опыт, тĕслĕхрен, Франци буржуазийĕн пур тата пысăк ăнлăхлă мошениклa компромиссен шкулĕ те пулман, çавăн пек шкулсем, сăмахран, Англи буржуазийĕн пур. Февраль революцийĕ сирпĕтсе антарнă патшапа ĕнер анчах килĕшÿ шыранă буржуази, февраль революцийĕ хыççăн влаç патне пырсан, пур тĕп ыйтусем тăрăх та ылханлă патша политикине тытса пырассинчен лайăххине урăх нимĕн те шухăшласа кăларма пултарайман. Вăл, патша пекех, çĕршыв вăрçă туса пыма вăй çитерейменнине, тата халăха, çара вĕçĕмсĕр ывăнтарса çитернине пăхмасăр, „вăрçа çĕнтерÿлĕн вĕçне çитерессишĕн" тăнă. Вăл, патша пекех, хресченсем çĕр çитменнине тата помещиксен пусмăрне пула пĕтсе пынине пăхмасăр, тĕпрен илсен çĕре помещиксен аллинчех хăварассишĕн тăнă. Рабочи клас тĕлĕшĕнчен тытса пынă политикăна илес пулсан, вырăс буржуазийĕ вара рабочи класа курайманнипе патшаран та иртсе кайнă, мĕншĕн тесен вăл заводчиксемпе фабрикантсен пусмăрне сыхласа хăварассишĕн тата тĕреклетессишĕн çеç мар, ăна массăлă локаутсем тунипе тата та чăтмалла мар чăтма çук йăвăр тума тăрăшнă.

Халăх патша политикипе буржуази политики хушшинче пысăк уйрăмлăхах курманнинчен, патшана курайман пекех буржуазин Вăхăтлăх правительствине те курайми пулнинчен тĕлĕнмели çук.

Есерсемпе меньшевиксен соглашателлĕ партисен халăх хушшинче паллă влийани пулнă чухне, буржуази вĕсемпе витĕнсе тăрса влаçа хăй аллинче сыхласа хăвармa пултарнă. Анчах та, меньшевиксемпе есерсем хăйсем империалисăмла буржуазин агенчĕсем пулнине кăтартса хăйсене хăйсем тăрă шыв çине кăларсан, çапла майпа халăх хушшинчи хăйсен влийанине çухатсан, буржуазипе унăн Вăхăтлăх правительстви сывлăша çаканса йулнă.

2. Октăбĕрти революци пуçĕнче революцилĕ клас, Россиăри рабочи клас, кĕрешÿсенче пиçĕхнĕ, кĕске вăхăтрах икĕ революци витĕр тухнă тата виççĕмĕш революци тĕлне миршĕн, çĕршĕн, ирĕклĕхшĕн, социалисăмшăн пыракан кĕрешÿре халăх çулпуçĕн авторитетне туйанна клас пулнă. Революцин Россиăри рабочи клас пек халăх шанăçне тивĕçлĕ пулнă çулпуç пулман пулсан, рабочисемпе хресченсен сойузĕ те пулман пулĕччĕ, çавăн пек сойузсăр вара Октăбĕрти революци те çĕнтерме пултарайман пулĕччĕ.

3. Россиăри рабочи класăн революцире вăйлă сойузник—чухăн хресченсем пулнă, вĕсем хресчен халăхĕ хушшинче пысăк ытларахăшлĕ пулнă. Революцин сакăр уйăх хушшинчи опычĕ,—ăна хăйулăнах „йĕркелĕ" аталанăвăн темиçе вуншар çулсен опычĕсемпе танлаштарма пулат,—хресченсен ĕççынnи массисемшĕн ахалех иртмен. Çак вăхăт хушшинче вĕсен ĕçре пур партисене те курса тĕрĕслеме тата кадетсем те, есерсемпе меньшевиксем те помещиксене хирĕç чăнласах çапăçас çуккине, хресченсемшĕн йун йухтарас çуккине, Россиăра помещиксемпе çыхăнса тăман, хресченсен нушисене пĕтерес тесе помещиксене лапчăтса лартма хатĕр тăракан парти пĕрре кăна пуррине,—вăл большевиксен партийĕ пулнине курса ĕненме пур майсем те пулнă. Çакă ĕнтĕ пролетариатпа чухăн хресченсен сойузĕн чăн-чăн никĕсĕ пулса тăнă. Рабочи класпа чухăн хресченсем хушшинче сойуз пулни вăтам хресченсем хăйсене мĕнле тыткалассине те татса панă, вĕсем нумайччен иккĕленсе тăнă, Октăбĕрти восстани умĕн кăна, чухăн хресченсем çумне пĕрлешсе, чăннипех революци йенне çаврăннă.

Кăтартса памасăрах паллă, çавăн пек сойузсăр Октăбĕрти революци çĕнтерме пултарайман пулĕччĕ.

4. Рабочи клас пуçĕнче политикăлă кĕрешÿсенче тĕрĕсленнĕ парти, большевиксен партийĕ тăнă. Большевиксен партийĕ пек парти кăна, халăха татăклă штурма илсе тухма çителĕклĕ таран хăйулă, тĕллев патне çитмели çул çинчи чăрмантаракан пур йышши тата пур тĕрлĕ чулсем патĕнчен те пăрăнса иртме çителĕклĕ таран сыхлануллă парти кăна, çакăн пек парти кăна революцилĕ тĕрлĕ

(Малали 3-мĕш страницăра)

М А Л А Л И.

йухăмсене: миршĕн пыракан пĕтĕмĕшлĕ-демократилĕ йухăма, помещиксен çĕрĕсене туртса илессишĕн пыракан хресченле-демократилĕ йухăма, пусмăрти халăхсен нацилĕ пĕртанлăхшăн пыракан нацилĕ-ирĕклĕхлĕ йухăма тата пролетариатăн буржуазине сирпĕтсе антарассишĕн, пролетариат диктатури туса хурассишĕн пыракан социализмлă йухăмне революцилĕ пĕтĕмĕшлĕ пĕр йухăма пĕлсе пултарулăн пĕрлештерме пултарнă.

Иккĕленмели çук, çак революцилĕ тĕрлĕ йухăмсене пĕр хăватлă революцилĕ йухăма пĕрлештерни Российйри капитализмăн кунçулне татса пачĕ.

5. Октябĕрти революци империализм вăрçи чи хĕрсе çитнĕ, буржуалă тĕп государствăсем пĕр-пĕрне курайман икĕ ушкăна уйăрăлса тăнă, вĕсем пĕр-пĕринпе вăрçăра тытăçса пĕр-пĕрне вăйсăрлатнипе „вырăссен ĕçне" чăнласах хутшăнма тата Октябĕрти революцине хирĕç активлăн тăма пултарайман вăхăтра пуçланнă.

Иккĕленмели çук, çак лару-тăру Октябĕрти социализмлă революцин çĕнтерĕвне чылайах çăмăллатнă.

7. Большевиксен партийĕ Совет влаçне çирĕплетессишĕн кĕрешни. Брестри мир. Партин VII-мĕш сĕесĕ.

Совет влаçне çирĕплетес тесен, кивĕ, буржуалă государствă аппаратне çĕмĕрмеле, ватмала тата унăн вырăнне Совет государствин çĕнĕ аппаратне туса лартмала пулнă. Малала тата, сословийăй строй йулашкисемпе нацилĕ пусмăр режимне çĕмĕрмеле, чиркӳ привилегисене пăрахăçа кăлармала, контрреволюцилĕ пичетпе пур йышши контрреволюцилĕ организацисене — уççăн ĕçлекеннисене те, вăрттăн ĕçлекеннисене те—пĕтермеле, буржуалă Учредительнăй собранине салатса йамала пулнă. Йулашкинчен, çĕре национализацилене хыççăн çавăн пекех пĕтĕм шултра промышлĕннăçа та национализацилемеле, çакăн хыççăн вара—вăрçăлă лару-тăруран тухмала, Совет влаçне çирĕплетессине пуринчен те ытларах чăрмантарса тăнă вăрçа пĕтермеле пулнă.

Çак ĕçсене пурне те 1917 çулăн вĕçĕнчен тытăнса 1918 çулăн çурма çулне çитичченхи темиçе уйăх хушшинче туса иртернĕ.

Есерсемпе меньшевиксем кивĕ министерствăсен чиновникĕсем хушшинче организацилене саботажа çĕмĕрсе тăкса пĕтернĕ. Министерствăсене пăрахăçа кăларнă, вĕсем вырăнне тытăмăн совет аппаратне тата тивĕçлĕ халăх комиссариачĕсене тунă. Çĕршыври промышлĕннăç ĕçне тытса пыма халăх хуçалăхĕн Аслă Советне туса хунă. Контрреволюцине тата саботажа хирĕç кĕрешме Пĕтĕм Российйри чрезвычайнăй комиççи (ВЧК) тунă, унăн пуçĕнче Ф. Дзержинский тăнă. Хĕрлĕ çарпа флот тăвасси çинчен декрет кăларнă. Учредительнăй собранине,—унăн суйлавĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, Октябĕр революциичченех пулса иртнĕ, вăл Советсен II-мĕш сĕесĕ мир çинчен, çĕр çинчен, влаç Советсене куçни çинчен йышăннă декретсене йышăнман, — салатса йанă.

Общĕствăлă пурнăçăн пур облаçĕсенче те феодализм йулашкисене, сословисене, пĕртан марлăха татăклăнах пĕтерес шутпа, сословисене пăрахăçа кăларасси çинчен, нацилĕ тата тĕн йĕрки тĕлĕшĕнчен пӳлнисене пĕтересси çинчен, чиркĕве государствăран тата шкула чиркӳрен уйăрасси çинчен, хĕрарăмсен пĕртанлăхĕ çинчен, Российйри националнăçсен пĕртанлăхĕ çинчен декретсем кăларнă.

Совет правительстви йатарласа йышăннă постановленире, — вăл „Декларация прав народов России" тенипе паллă,—Российйри халăхсен ирĕклĕ аталанăвĕ тата вĕсем пурте пĕртан пулни саккун пулса тăрĕ, тесе кăтартса панă.

Буржуазин економикăлă вăйне хавшатма тата çĕнĕ советлă халăх хуçалăхĕ организацилеме, чăн малтан—çĕнĕ, совет промышлĕннăçĕ организацилеме банксене, чукунçулсене, тулашри суту-илӳве, суту-илӳ флотне тата пĕтĕм шултра промышлĕннăçа унăн пур отрăçлисенче те: çĕркăмрăк, тимĕртăмăр, нефт, хими, машиностройени, пиравăр, сахăр т. ыт. отрăçлăсене национализацилене.

Хамăр çĕршыва финанс тĕлĕшĕпе йут çĕршыв капиталисĕсене пăхăнса тăрассинчен тата вĕсен експлуатацинчен хăтарас шутпа, патшапа Вăхăтлăх правительствă йут çĕршывсенчен илнĕ зайомсене пăрахăçа кăларнă. Пирĕн çĕршыври халăхсем, çаратулă вăрçă ĕçне малала туса пыма илнĕ тата хамăр çĕршыва йăвăрлăха кĕртсе йут çĕршыв капиталне пăхăнтармала тăвакан парăмсене тӳлесшĕн пулман.

Çак ĕçсем тата çавăн пек ытти ĕçсем буржуазин, помещиксен, реакцилĕ чиновниксен, контрреволюцилĕ партисен вăйне тĕпренех хавшатнă тата çĕршыв ăшĕнче Совет влаçне чылайах çирĕплетнĕ.

Анчах Российă Германи тата Австри государствисемпе вăрçăра тăнă вăхăтра Совет влаçĕн пурнăçне пĕтĕмпех çирĕпленсе çитнĕ тесе шутлама пулман. Совет влаçне татăклăнах çирĕплетес тесен, вăрçа пĕтермеле пулнă. Çавăнпа та парти Октябĕр революцийĕ çĕнтернĕ хыççăнхи малтанхи кунсенчех миршĕн кĕрешӳ пуçласа йанă.

Совет правительстви „вăрçă вăрçакан пур халăхсемпе вĕсен правительствисене те тӳрĕ, демократилĕ мир тăвасси çинчен халех калаçу пуçласа йама" сĕнӳ панă. Анчах та „сойузниксем" Англипе Франци—Совет правительствин сĕнĕвне йышăнма килĕшмен. Англипе Франци мир тăвасси çинчен калаçу пуçлама килĕшмен пирки, Совет правительстви, Советсен ирĕкне пурнăçласа, Германипе тата Австрипе калаçу пуçласа йама йышăннă.

Калаçусем декабĕрĕн 3-мĕшĕнче Брест-Литовскинче пуçланнă. Декабĕрĕн 5-мĕшĕнче перемири тăвасси çинчен, вăрçă ĕçĕсене вăхăтлăха чарса лартасси çинчен килĕшсе ал пуснă.

Калаçусем халăх хуçалăхĕ ишĕлсе çитнĕ обстановкăра, вăрçăна пула пурте ывăнса çитнĕ, пирĕн çар чаçĕсем фронтсенчен пăрахса кайнă обстановкăра, фронтсем йухăнса пынă обстановкăра пулнă. Калаçусем вăхăтĕнче акă мĕн парнă: Германи империалисĕсем патша империйĕ пулнă территорирен пысăк татăксем йарса илме, Польшăна, Украинăна, Балти тинĕс тăрăхĕнчи çĕршывсене Германине пăхăнса тăракан государствăсем туса хума тăрăшнă.

Çак условисенче вăрçа малашне те чăсса пыни—вăл тин çеç çуралнă Совет республикĕн пурнăçне картă çине кăларса тăратнине пĕлтернĕ. Рабочисемпе хресченсемшĕн мирĕн йăвăр условисене йышăнасси, ун чухнехи чи хăрушă тискер кайăк—Германи империализмĕ умĕнче,—сывлăш çавăрса илес тесе, Совет влаçне тĕреклетес, çĕршыва тăшмансем тапăнассинчен хӳтлеме пултаракан çĕнĕ, Хĕрлĕ çар тăвас тесе,—чакасси кирлĕ пулнă.

Пур контрреволюционерсем те,—меньшевиксемпе есерсенчен пуçласа чи усал шургвардейĕçсем таранах,—мир тăвассине хирĕç урса кайсах агитатци туса пынă. Вĕсен çулйĕрĕ паллă пулнă: вĕсем мирлĕ калаçусене пĕтерсе лартасшăн, нимĕçсене наступленине кăларасшăн, тĕрекленсе çитеймен Совет влаçне çапса хуçмала тăвасшăн, рабочисемпе хресченсем кĕрешсе илнисене пĕтерсе лартмала тăвасшăн пулнă.

Çак тĕттĕм ĕçре вĕсен сойузникĕсем Троцкий тата унăн алйытти Бухарин пулнă. Бухарин Радекпа тата Пйатаковпа пĕрле партине хирĕçле группăна, маскăпа витĕнес шутпа хăйсене „сулахай коммуниссем" текен группăна йĕртсе пынă. Троцкипе „сулахай коммуниссен" группи парти ăшĕнче Ленина хирĕç хăйаррăн кĕрешнĕ, вăрçăна малала тăсма хушнă. Çак етемсем уççăнах Германи империалисĕсемпе çĕршыв ăшĕнчи контрреволюционерсене пулăшнă, мĕншĕн тесен вĕсем çамрăк, хăйĕн çарне те тăвайман Совет республикине Германи империализмĕ çапмала тума хăтланнă.

Ку вăл темĕнле провокатăрла, сулахай сăмахсемпе ăстан витĕнсе тăвакан политикă пулнă.

1918 çулти февралĕн 10-мĕшĕнче Брест-Литовскинчи мирлĕ калаçусем чарăннă. Ленинпа Сталин парти Тĕпкомĕ йачĕпе мир тума çине тăрса хушнă пулсан та, Бреста Совет делегацин председателĕ пулса кайнă Троцкий большевиксен партийĕ тӳррĕмĕн хушнине предателле пăснă. Вăл Совет республикĕ Германи тăратакан условисем тăрăх мир тума килĕшмест тесе пĕлтернĕ, çав вăхăтрах тата нимĕçсене—Совет республикĕ вăрçă туса пымасть тата çара малашне те демобилизацилесе пырать, тесе пĕлтернĕ.

Çакă вăл тискерле ĕç пулнă. Совет çĕршывĕн интересне сутакантан нимĕç империалисĕсем çакăнтан ытла нимĕн те ыйтма пултарайман.

Германи правительстви перемирине пĕтерсе хунă та наступлени тума пуçланă. Пирĕн кивĕ çарăн йулашкисем нимĕç çарĕсем хĕстерсе килнине чăтса тăрайман, вĕсем тарса саланма пуçланă. Нимĕçсем хăвăрттăн пысăк территорисем илсе малала пынă, Петрограда хăратса тăнă. Германи империализмĕ Совет çĕршывне килсе кĕрсен, Совет влаçне пĕтерсе хурса пирĕн тăван çĕршыва хăйĕн колонийĕ туса хурас шут тытнă. Кивĕ, ишĕрĕлсе пыракан патша çарĕ Германи империализмĕн хĕçпăшалланнă çарĕсене хирĕç чăтса тăма пултарайман. Вăл Германи çарĕ хĕснипе кайала чакса пынă.

Анчах та нимĕç империалисĕсен хĕçпăшаллă интервенцийĕ çĕршывра революцилĕ вăйлă çĕкленӳ таппратса йанă. Партипе Совет правительстви: „Социализмлă тăван çĕршыв хăрушлăхра", тесе панă чĕнĕве рабочи клас Хĕрлĕ çар чаçĕсене хăвăрттăн йĕркеленипе ответленĕ. Çĕнĕ çарăн революцилĕ халăх çарĕн çамрăк отрйачĕсем шăл таран хĕçпăшалланнă Германи тискер кайăкĕсем хĕснине паттăррăн çĕмĕрсе пынă. Нарвăпа Псков патĕнче нимĕç оккупанчĕсене татăклă отпор панă. Вĕсем Петроград çине тапăнса пырассине чарса лартнă. Германи империализмĕн çарĕсене отпор панă кун—февралĕн 23-мĕш—çамрăк Хĕрлĕ çар çуралнă кун пулса тăнă.

1918 çулти февралĕн 18-мĕшĕнчех парти Тĕпкомĕ Германи правительстви патне халех мир тăвасси çинчен телеграм йама Ленин панă сĕнĕве йышăннă. Хăйсене валли майлăрах мир условисем тăвас шутпа нимĕçсем çаплах наступлени туса пынă, февралĕн 22-мĕшĕнче тин вара Германи правительстви мир тума килĕшӳ панă, анчах мир тăвас условисем кунхинче малтанхинчен те чылай йăвăртарах пулнă.

Ленинăн, Сталинăн, Свердловăн Тĕпкомра мир çинчен решени йышăнтарма Троцкипе Бухарина тата ытти троцкиссене хирĕç хытă кĕрешмеле пулнă. Ленин: Бухаринпа Троцкий „ĕçре Германи империалисĕсене пулăшрĕç, Германире революци ӳссе аталанассине чăрмантарчĕç" (Ленин, т. XXII, стр. 307), тесе кăтартса панă.

Февралĕн 23-мĕшĕнче Тĕпком нимĕç командованийĕн условийĕсене йышăнма тата мир тума постановлени йышăннă. Троцкипе Бухарин предательстви Совет республикине хакла ларнă. Латви, Естони—Польшă çинчен каламасăр та—Германи çумне куçнă. Украинă Совет республикĕнчен уйăрăлнă, нимĕçсене пăхăнса тăракан вассальнăй государствă пулса тăнă. Совет республикĕн нимĕçсене контрибуци тӳлеме йышăнмала пулнă.

Çав вăхăтрах „сулахай коммуниссем" Ленина хирĕç кĕрешсе ытларах та ытларах предательствă лачакине анса пынă.

Партин, вăхăтлăха „сулахай коммуниссен" (Бухарин, Осинский, Иакавлĕва, Стукăв, Манцев) аллине кĕрсе ӳкнĕ Мускав облаç бӳровĕ Тĕпкома шанас марри çинчен расколникла резолюци йышăннă, вăл „çитес вăхăтра партире раскол пулассине сирсе йама пулмасть пулмала" тесе шутлать, тенĕ. Çак резолюцире вĕсем совета хирĕçле решени йышăнасси патне çитсе тăнă: „Пĕтĕм тĕнчери революци интересĕшĕн,—тесе çырнă „сулахай коммуниссем" çак решенире,—епĕр халĕ ĕнтĕ формальнă анчах пулса тăракан Совет влаçне çухатассине те вырăнлă тесе шутлатпăр".

Ленин çак решенине „тĕлĕнмеле те тискерле" тесе шутланă".

Вăл вăхăтра партишĕн Троцкипе „сулахай коммуниссем" хăйсене çакăн пек партине хирĕçле тыткаланин сăлтавĕ паллах пулман. Анчах та нумайах пулмасть пулса иртнĕ совета хирĕç „сылтăм троцкисла блок" процесĕ (1938 çулăн пуçламĕшĕ) çакна кăтартса пачĕ: Бухарин тата вăл йĕртсе пынă „сулахай коммуниссен" группи Троцкипе тата „сулахай" есерсемпе пĕрле, ун чухнех Совет правительствине хирĕç вăрттăн загăвăрта тăнă пулнă мĕн. Бухарин, Троцкий тата вĕсемпе пĕр загăвăрта тăнисем ун чухнех Брестри догăвăра пĕтерсе лартас, В. И. Ленина, И. В. Сталина, Йа. М. Свердлова арĕслес, вĕсене вĕлерес, вара бухаринçăсенчен, троцкиссенчен, „сулахай" есерсенчен çĕнĕ правительствă туса лартас тĕллев тытса ĕçленĕ пулнă мĕн.

Контрреволюцилĕ вăрттăн загăвăр организацилесе, çакăнпа пĕр вăхăтрах „сулахай коммуниссен" группи, Троцкий пулăшнипе, большевиксен партине хирĕç, партире раскол тăвас, парти речĕсене аркантарса йарас шутпа, уççăнах атакă туса пынă. Анчах та парти çак йăвăр вăхăтра Ленин, Сталин, Свердлов тавра пĕтĕçнĕ, мир çинчен тăракан ыйтура та, ытти ыйтусенчи пекех, Тĕп Комитет майлă тăнă.

„Сулахай коммуниссен" группи пĕр пĕччен тăрса йулнă, ăна çĕмĕрсе тăкнă.

Мир çинчен тăракан ыйтăва татăклăн татса пама партин VII-мĕш сĕесне пухнă.

Партин VII-мĕш сĕесĕ 1918 çулти мартăн 6-мĕшĕнче уçăлнă. Ку сĕес пирĕн парти влаçа илнĕ хыççăн пухнă пирвайхи сĕес пулнă. Сĕесра ĕç тăвакан сасăпа 46 делегат, канашлакан сасăпа 58 делегат пулнă. Сĕесра делегатсем 145 пин парти членĕсенчен пулнă. Тĕрĕссипе çак вăхăтра партире членсем 270 пин çынран кайă мар пулнă. Çакăн пек уйрăмлăх вăл, сĕес екстреннă пухăннăран килнĕ, организацисенчен чылай пысăк пайĕ делегатсем йама ĕлкĕреймен, вăхăтлăха нимĕçсем оккупаци тунă территорисенчи организацисем сĕеса делегатсем йама пултарайман.

Брестри мир çинчен доклад туса, çак сĕесра Ленин каланă: „... пирĕн парти, унта сулахай оппозици пулса тăнине пула пурăнса иртерекен йăвăр кризис, вырăс революцийĕ пурăнса иртерекен чи йăвăр кризиссенчен пĕри пулать" (Ленин, т. XXII, стр. 321).

Брестри мир çинчен тăракан ыйту тăрăх сĕес Ленин резолюцине 30 сасăпа, 12 сасă хирĕç, 4 сасă сасăламасăр тăнă пулнипе йышăннă.

Резолюцине йышăннă хыççăн Ленин тепĕр кунхине çырнă „Несчастный мир" статйара:

„Мир условисем тӳсме çук йăвăр. Çапах та истори хăйĕнне илетех... Организаци, организаци, организаци ĕçĕшĕн. Малашлăх, темĕн курса иртермеле пулсан та, пирĕншĕн", тенĕ (Ленин, т. XXII, стр. 288).

Сĕес йышăннă резолюцире империализмлă государствăсем пурĕ пĕрех малашне те Совет республикине хирĕç тухма пултарнине палăртса хăварнă, çавăнпа та сĕес партин тĕп задачĕ—рабочисемпе хресченсен харпăр дисциплинине, дисциплинăна вăйлатма, массăсене социализмлă тăван çĕршыва пурнăçа шеллемесĕр хӳтлемешкĕн хатĕрлеме, Хĕрлĕ çар организацилеме, пĕтĕм халăха çар ĕçне вĕрентме хăйулă та татăклă ĕçсем туса иртерессипулать, тесе шутланă.

Сĕес Брестри мир ыйтăвĕ тăрăх ленинла çулйĕр тĕрĕс пулнине çирĕплетнĕ, сĕесра хăйĕнче те расколникла ĕç тума пăхса поражени курнă „сулахай коммуниссене" намăслантарса йатласа Троцкипе Бухарин позицине сивленĕ.

Брестра мир туни Совет влаçне тĕреклетес, çĕршыв хуçалăхне йĕркене кӳртес тĕлĕшпе сывлăш çавăрса илме вăхăт панă.

Мир туни империализм лагĕрĕнчи хирĕçӳсемпе усă курма (Австро—Германи çаплах Антантăпа вăрçнă), тăшман вăйĕсене аркантарма, совет хуçалăхне организацилеме, Хĕрлĕ çар тума май панă.

Мир туни пролетариата хăй çумĕнче хресченсене тытса тăма тата граждăн вăрçи вăхăтĕнче шурргварди генералĕсене çĕмĕрсе тăкмашкăн вăй пухма май панă.

Октябĕр революци вăхăтĕнче Ленин партине кирлĕ условисем пур чухне нимĕн хăрамасăр хăйуллăн, татăклăн мĕнле наступлени тумалине вĕрентнĕ. Брест мирĕ вăхăтĕнче Ленин партине тăшман вăйĕ куç кĕреттĕнех пирĕн вăйсенчен нумайтарах чухне йĕркелĕн кайала чакма, çапла тунипе—тăшмана хирĕç çĕнĕ наступлени тума питĕ пысăк вăйа хурса хатĕрленме вĕрентнĕ.

Истори ленинла çулйĕр пĕтĕмпех тĕрĕс пулнине кăтартрĕ.

Партин VII-мĕш сĕесĕнче парти йатне улăштарасси çинчен, çавăн пекех тата партин программине улшăнусем кĕртесси çинчен решенисем йышăннă. Партине Российйри Коммуниссен (большевиксен) Партийĕ тесе чĕнме пуçланă. Ленин пирĕн партине коммуниссен партийĕ теме сĕннĕ, мĕншĕн тесен, çакăн пек йат вăл парти хăй умне лартнă тĕллевле—коммунизма пурнăçлас тĕллевпе тĕрĕссĕн килĕшсе тăнă.

Партин çĕнĕ программине тума уйрăм комиççи тунă, унта Ленин, Сталин тата ыттисем кĕнĕ, программăн тĕп никĕсне Ленин хатĕрленĕ пройекта хунă.

Çапла вара, VII-мĕш сĕес историлĕ пысăк ĕçсем тунă: вăл парти ăшĕнче пытанса тăнă тăшмансене—„сулахай коммуниссене", тата троцкиссене çĕмĕрсе тăкнă империализм вăрçинчен хăтăлса тухмала тунă, вăл мир, сывлăш çавăрттарса йама вăхăт илме май панă, вăл партине Хĕрлĕ çар организацилеме вăхăт панă тата партине халăх хуçалăхĕнче социализмлă йĕрке тума хушнă.

8. Социализм строительствине тытăнмали ленинла план. Комбедсем тата кулаксене çăварлăхлани. „Сулахай" есерсен пăлхавĕ тата ăна пусарса лартни. Советсен V-мĕш сĕесĕ тата РСФСР Конституцине йышăнни.

Мир туса сывлăш çавăрса йама вăхăт илсе, Совет влаçĕ социализм строительствине сарса пыма тытăннă. 1917 çулти нойабĕрпе 1918 çулти феврал хушшинчи тапхăра Ленин „капитал çине красногвардилĕ атакă" тунă тапхăр тенĕ. Совет влаçĕ 1918 çулăн малтанхи çурçулĕнче буржуазин хуçалăхлă вăйне хуçма, халăх хуçалăхĕн тĕп отрăçлисене (хапрăксене, савăтсене, банксене, чукунçулсене, тулашри суту-илӳве, суту-илӳ флотне т. ыт.) хăй аллине пуçтарса илме, государствă влаçĕн буржуалă аппаратне çĕмĕрме, контрреволюци Совет влаçне сирпĕтсе йама хăтланнине çĕнтерӳлĕн пĕтерме пултарнă.

Анчах çаксемпе кăна çителĕклĕ пуласси инçе пулнă-ха. Малала кайма киввине ишĕлтерсе тăкассинчен çĕннине тума тытăнмала пулнă. Çавăнпа та 1918 çулта çуркунне социализм строительствин çĕнĕ етапне—„експроприатăрсене експроприацилессинчен" тунă çĕнтерӳсене организацилĕн çирĕплетме, советла халăх хуçалăхне тума тытăнасси пуçланнă. Ленин сывлăш çавăрса йама илнĕ вăхăтпа социализмлă економикăн никĕсне тума тытăнма май пур таран ытларах усă курмала, тесе шутланă. Большевиксен производствăна çĕнĕле организацилеме, ăна тытса пыма вĕренмеле пулнă. Ленин: большевиксен парти Российăна ĕнентерчĕ, большевиксен парти Российăна пуйансенчен халăх валли кĕрешсе илчĕ, тесе çырнă, халĕ ĕнтĕ, тенĕ вăл, большевиксен партин Российăна тытса пыма вĕренес пулать.

Çак етапри тĕп задачăсем тесе Ленин халăх хуçалăхĕнче тунисене учота илес, туса кăларакан пĕтĕм продукцине мĕнле расхутланине контроль туса тăрас задачăсене шутланă. Çĕршывра хуçалăхра вак буржуалă елементсем ытларах пулнă. Хулари тата йалти мĕлйуншар вак хуçалăхсем капитализм ӳсмели тăпра вырăнне пулнă. Çак вак хуçасем ĕç дисциплинине те, государствă дисциплинине те йышăнман, вĕсем учота та, контроле те пăхăнман. Çак йăвăр самантра уйрăмах спекуляципе услам тунин вакбуржуалă çтихийĕ тата вак хуçасемпе торговĕçсем халăх нуши çинче пуйма хăтланни уйрăмах хăрушлăх пулнă.

Парти производствăри йĕркесĕрлĕхе хирĕç, промышлĕннăçра ĕç дисциплини çуккине хирĕç вăйлă кĕрешӳ пуçарса йанă. Çĕнĕ ĕç йĕркисене массă йĕрипен хăнăхса пынă. Çавăнпа та ку тапхăрта ĕç дисциплинишĕн кĕрешесси тĕп задачă пулса тăнă.

Ленин промышлĕннăçра социализмлă ăмăртăва сарса пыма, ĕçшĕн сдельнă тӳлемеле тума, уравнилăвкăна хирĕç кĕрешме, ĕнентерес ĕçре воспитанипе пĕрлех государствăнне ытларах йарса илме шутлăкансене, найанланакансене тата спекуляципе хăтланакансене ирĕксĕрлесе итлеттерес мĕтăдсемпе те усă курма кирлине кăтартса панă. Ленин çĕнĕ дисциплинă—ĕç дисциплини, йулташла çыхăну дисциплини, советла дисциплинă—мĕлйуншар ĕççыннисен кулленхи практикăлă ĕçĕнче пулса пырать, тесе шутланă. Вăл „çак ĕç историлĕ пĕр епохăна йышăнать", тесе шутланă (Ленин, т. XXIII, стр. 41).

Социализм строительствин çак мĕнпур ыйтăвĕсене, социализмлă çĕнĕ производствăлă хутшăнусене тăвас ыйтусене Ленин хăйĕн „Очередные задачи Советской власти" йатлă чапла кĕнекинче çутатса панă.

„Сулахай коммуниссем" есерсемпе тата меньшевиксемпе пĕрле пулса, çак ыйтусем тăрăх та Ленина хирĕç кĕрешме пуçланă. Бухарин, Осинский тата ыттисем дисциплинă тăвассине хирĕç, предприйатисенче йединоначали тăвассине хирĕç, промышлĕннăçра специалиссемпе усă курассине хирĕç, хуçалăх расчочĕ тăвассине хирĕç тăнă. Вĕсем çакăн пек политикă буржуалă йĕркесем патне кайала таврăнни пулать тесе, Ленин çинчен елекленĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах „сулахай коммуниссем" Российăра социализм строительстви тата социализм çĕнтерĕвĕ пулма пултараймасть тесе троцкисла шухăшсене сарнă.

„Сулахай комуниссен" „сулахайла" сăмахĕсем хыçĕнче кулака, найана, спекулянта хӳтĕлени пытанса тăнă, вĕсем дисциплинăна хирĕç пулнă, хуçалăх пурнăçне государствă йĕркелесе пырасси çине, учотпа контроль çине тăшманла пăхнă.

Çĕнĕ, советлă промышлĕннăç тăвасси çинчен ыйтăва татнă хыççăн, парти йал ыйтăвĕсем çине куçнă. Çак вăхăтра йалта чухăнсемпе кулаксем хушшинчи кĕрешӳ вĕресе тăнă. Кулаксем вăй илсе хăйсен аллине помещиксенчен туртса илнĕ çĕрсене йарса илме пуçланă. Чухăнсене пулăшу кирлĕ пулнă. Кулаксем пролетари государствине хирĕç кĕрешсе, вĕсем государствăна тырă çирĕп хакпа сутасшăн пулман. Вĕсем выçлăх пулăшнипе Совет государствине социализмлă ĕçсем тăвассине пăрахтарасшăн пулнă. Парти контрреволюцилĕ кулаксене çĕмĕрсе тăкас задачă лартнă. Чухăнсене организацилеме тата ытлашши тырă тытакан кулаксене хирĕç ăнăçла кĕрешме йала рабочисен походне организациленĕ.

„Йулташсем — рабочисем! — тесе çырнă Ленин, — Астăвăр, революцишĕн чи йăвăр вăхăт килсе çитрĕ. Астăвăр, революцине пĕр есĕр анчах çăлма пултараттăр,—ăна çăлаканни урăх никам та çук. Вуншар пин чи лайăх, малта пыракан, социализм ĕçĕшĕн чĕререн тăракан, вçаткă илме тата çаратма пултарман, кулаксене, спекулянтсене, мародерсене, вçатăчниксене, дезорганизатăрсене хирĕç тимĕр пек вăй тума пултаракан рабочисем,—акă мĕн кирлĕ" (Ленин, т. XXIII, стр. 25).

„Тырăшăн кĕрешни—социализмшăн кĕрешни пулать",—тенĕ Ленин. Çак лозунг тăрăх пулса пынă рабочисене йала поход тума организацилесси. Çимĕç диктатури тăвакан тата наркомпрод оргăнĕсене çирĕп хакпа тырă илме чрезвычайнăй полномочисем паракан чылай декретсем кăларнă.

1918 çулти ийунĕн 11-мĕшĕнче кăларнă декрет тăрăх чухăнсен комитечĕсене (комбедсем) тунă. Комбедсем кулаксене хирĕç кĕрешес, конфискациленĕ çĕре çĕнĕрен валеçес тата хуçалăх инвентарĕсене валеçес, кулаксен ытлашши продовольствине илсе хатĕрлес, рабочи центрĕсемпе Хĕрлĕ çара валли продовольстви тăратас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнă. Кулаксен çĕрĕсем 50 мĕлйун гектар чухăнсемпе вăтамсен аллине куçнă. Кулаксенне чылай производствă хатĕрĕсене чухăнсем валли конфискацилесе панă.

Чухăнсен комитечĕсене организацилени йалта социализмлă революцине сарса пырас ĕçре малали етап пулнă. Комбедсем пролетариат диктатурин йалти опорлă пунктсем пулнă. Хресчен халăхĕ хушшинчен Хĕрлĕ çар валли кадрсем илесси чылай йенпе комбедсем урлă пулса пынă.

Иала пролетарисен походне туни тата чухăнсен комитечĕсене организацилени йалта Совет влаçне тĕреклетнĕ тата вăтам хресченсене Совет влаçĕ йенне кĕрешсе илессинче политикă йенпе пысăк вырăн йышăнса тăнă.

1918 çулăн вĕçĕ тĕлне, комбедсем хăйсен задачисене туса çитернĕ хыççăн, вĕсем пĕтнĕ, йалсенчи Советсемпе пĕрлешсе кайнă.

1918 çулти ийулĕн 4-мĕшĕнче Советсен V-мĕш сĕесĕ уçăлнă. Сĕесра „сулахай" есерсем кулаксене майлă тăрса Ленина хирĕç хăйар кĕрешӳ сарса йанă. Вĕсем кулаксене хирĕç кĕрешессине пĕтерсе лартма, йала рабочисен продовольстви отрйачĕсене йарассине пăрахăç тума требовани лартнă. „Сулахай" есерсем, сĕесăн ытларахăш пайĕ вĕсен çулйĕрне хирĕç хыттăн тăнине курсан, Мускавра пăлхав организациленĕ, Трехсвйатительски переулока йарса илсе, унтан артиллерирен Кремль çине пеме пуçланă пулнă. Анчах çак „сулахай"-есерла аванťурăна большевиксем темиçе сехет хушшинчех путарса лартнă. Çĕршывăн чылай пунктисенче „сулахай" есерсен вырăнти организацийĕсем восстанисем тума хăтланса пăхнă, анчах çак аванťурăна пур çĕрте те хăвăрттăн пĕтерсе хунă.

Халĕ ĕнтĕ, совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕнче палăрни тăрăх çакă паллă: „сулахай" есерсен пăлхавне Бухаринпа Троцкий пĕлсе тăнипе, вĕсем килĕшӳ панипе пуçласа йанă пулнă, вăл пăлхав бухаринĕçсен, троцкиссен, „сулахай" есерсен Совет влаçне хирĕç тунă контрреволюцилĕ загăвăр планĕн пĕр пайĕ пулнă.

Çав вăхăтрах „сулахай" есер Блюмкин, кайарахпа Троцкий агенчĕ, Германи посольствине кĕрсе кайса, Германипе вăрçă кăлармала тăвас шутпа Германин Мускаври посолне—Мирбаха вĕлернĕ. Анчах та Совет правительстви вăрçă пулассине сирсе йама, контрреволюционерсен провокацине пĕтерсе хума пултарнă.

Советсен V-мĕш сĕесĕнче РСФСР Конституцине—Советсен пирвайхи Конституцине йышăннă.

(Малали 4-мĕш страницăра).

Пĕтĕм çĕршывсенчи пролетарисем! Колонисенчи пусмăрта пурăнакан халăхсем! Ирĕке тухассишĕн пыракан кĕрешӳ йалавне çӳлерех çĕклĕр! Тĕп пултăр капиталисăм! Тĕп пултăр нацилĕ чуралăх! Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери пролетарилĕ револђуци!

(ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револђуци 21 çул тултарнă тĕле панă лозунгсенчен)

Фашисăма хирĕçле фронт пĕтĕм тĕнчипех ӳссе сарăлса пырат̆

Совет Сойузĕнчи халăхсем Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револђуци XXI çул тултарнине кĕтсе илеççĕ, çак вăхăтра вĕсем социалисăмăн аслă çĕршывĕн хăватне, вăйне тата тĕреклĕхне тарăнăн туйса тăраççĕ.

Совет халăхĕ фашисăмăн тăшманла агентурине — тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă ирсĕр троцкиссене, бухаринçăсене, буржуалă-националиссене çĕмĕрсе тăкрĕ, çак тăшмансем социалисăм çĕршывĕн хăватне çĕмĕрме, ăна тăшман умĕнче вăйсăрлатса хăварма хăтланнă. Совет Сойузĕ Хасан кӳлли патĕнче Совет çĕрĕ çине кăсса кĕнĕ, провокаци туса Совет Сойузне хирĕç вăрçă кăларма хăтланнă Йапони самурайĕсен бандисене çĕмĕрсе тăкрĕ.

Хасан кӳлли патĕнче Йапони самурайĕсене панă урок хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн—пĕрлĕхлĕ совет халăхĕ пулăшса тăракан Хĕрлĕ Çарăн аслă та никам çĕнтерейми вăйне пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕ. Йапони военщинине çĕмĕрсе тăкса, Совет Сойузĕ çакна ĕнентерӳлĕн кăтартса пачĕ: агрессăрсен вăйĕ вĕсем хăйсем кăтартма тăрăшнă пекех пысăк мар, хăйсене отпор панă хыççăн, вĕсем йаланах кайала чакаççĕ.

Совет Сойузĕ мирлĕ пурнăçшăн кĕрешсе вăрçă вучĕ чĕртекенсене отпор парас тĕлĕшпе çирĕп политика тытса пырат̆ пулсан, буржуалă-демократилĕ çĕршывсем — Англи тата Франци йăлтах урăхла туса пыраççĕ, вĕсем малтан фашисла агрессăрсене уступкăсем парса пычĕç, кайран вара тӳррĕнех вĕсемпе кавар турĕç. Сеңтябĕрĕн 29-мĕшĕнче Англи, Франци, Германи тата Итали Чехословакине Германи, Полђшă тата Венгри хушшинче вăрă-хурахла уйăрса пайласси çинчен Мӳнхенра килĕшӳ туса алă пусрĕç. Англипе Франци правителствисем пил панă тăрăх, фашисла государствăсем тĕнчене çĕнĕрен империалисăмла пайласа уйăрма хатĕрленеççĕ.

„...Иккĕмĕш империалисăмлă вăрçă чăннипе илсен, пуçланнă та ĕнтĕ. Вăл шăппăн та шавсăр, вăрçă тапратни çинчен пĕлтермесĕр пуçланчĕ. Государствăсемпе халăхсем иккĕмĕш империалисăмлă вăрçă орбитине сисĕнчĕксĕр шуса кĕчĕç. Вăрçăна тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕсенче агресçивлă виçĕ государства—Германири, Италири тата Йапонири влаçа тытса тăракан фашисла ушкăнсем пуçларĕç. Вăрçă Гибралтартан пуçласа Шанхай патне çити сарăлса выртакан пысăк талкăш çинче пырат̆. Вăрçă хăйĕн орбитине çур мĕлйард ытла халăха туртса кĕртме те ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ". (ПСК(б)П историйĕ, 318 стр.).

Мӳнхенра кавар тунă хыççăн, Германи, Полђшă тата Венгри фашисĕсем Чехословаки республикин территорине татăк-татăкăн вакласа çураççĕ. Фашисла Германи хавхалантарса пулăшса тăнипе Чехословакире хăйĕнче те фашисла реакци хăйĕн пуçне çĕклерĕ. Вăл çĕршывра фашисла йĕрке туса хума тата Чехословакине Германи фашисăмĕн пусмăрне кĕртсе ӳкерме тăрăшат̆.

Англипе Франци ирĕк панипе, Германи—Итали фашисĕсем геройла Испани халăхне пăвса хурас шутпа пĕтĕм вăйне хурса тăрăшаççĕ.

Англири тата Францири реакцилĕ елементсем тĕнчери демократилĕ вăйсене хирĕç наступлени туса пыраççĕ.

Пĕтĕм çĕршывсенчи ĕççыннисем, пуринчен те малтан рабочи клас, çакна пит лайăх ăнланаççĕ: халђхи вăхăтри чи кирлĕ те пысăк задача вăл—вăрçăпа фашисăма хирĕç, ĕççыннисене вĕçĕ-хĕррисĕр асап кӳрекен вăрçăпа фашисăма хирĕç кĕрешесси пулса тăрат̆.

Фашисла государствăсен вăрă-хурахла ĕçĕсене хирĕç çине тăрса кĕрешекен Испанипе Китай халăхĕсене халђхи вăхăтра пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем йуратаççĕ, вĕсемпе пĕр шухăшлă.

Нумайăх пулмаст̆-ха Англи правителстви, Итали фашисăмĕпе кавар туса, Испани республикине хăвăрт çĕмĕрсе тăкас тĕллев тытнă. Анчах, вăл тĕллев арканса тăкăнчĕ. 1938 çулти ийулђ уйăхĕн вĕçĕнче республикăн паттăр çарĕ Ебро йуханшывĕ çинче пит те чаплă наступлени тунă. Темиçе кун хушшинче фашиссенчен 700 тăваткăл километрлă территори туртса илнĕ. Унта пăлхавçăсемпе интервентсене çапса çĕмĕрсех тăкнă. Тăшман хайар атакăсем тăват̆ пулсан та, республиканĕçсем фашиссенчен туртса илнĕ территорине хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ. Ебро йуханшывĕ патĕнче çухатнă территорине кайала туртса илес шутпа ăнăççăр атакăсем туса, фашиссен 60 пин çын вилсе тата аманса пĕтнĕ. Ебро йуханшывĕ патĕнчи çапăçусем республикăн калама çук пысăк хăватне, Испани халăхĕ фашиссене тата Германи-Итали интервенчĕсене йăлт çĕнтеричченех кĕрешме хатĕр тăнине кăтартса пачĕç.

Çĕр чăмăрĕн тепĕр пайĕнче—хĕвелтухăçĕнче — Йапони империалисăмĕ Китай халăхне хирĕç вăрă-хурахла вăрçă туса пырат̆. Китайăн пысăк хулисене чылай туртса илнĕ пулсан та, йапонĕçсем çĕнтерӳрен калама çук инçе-ха. Китайри вăрçă ытларан ытларах нумай вăхăта тăсăлса пырат̆. Вăрçăра вилсе, аманса тата тыткăна лексе 750 пин çын пĕтни, вăрçă ĕçĕшĕн калама çук нумай пурлăх пĕтсе пыни (вăрçă йапонĕçсемшĕн кашни уйăхрах мелйард çурă тенке йахăна ларат̆), — çаксем пурте ĕнтĕ Йапонин ахалђ те начар економикăлă положенине татах йăвăрлатса пыраççĕ. Чухăнлăхпа выçлăха пула; хресченсем йухăнса пынине пула, рабочи класăн пурнăçĕ начарланса пынине пула, çĕршывра вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем ӳссе пыраççĕ, вĕсем Йапони империалисăмĕн вăйĕсене хавшатса пыраççĕ.

Китайра йăлтах урăхла: Китай халăхĕ, татăклă çапăçусенче захватчиксене тĕппипех çапса салатма хатĕрленсе, кулленкун ытларах пĕрлешсе пĕтĕçет, вăй пухат̆, хăйĕн вăрçă хăватне тĕреклетсе пырат̆.

Фашисăма хирĕçле вăйсем пур çĕршывсенче те кунсеренех ӳссе пыраççĕ. Пĕтĕм тĕнчери мĕлйуншар ĕççыннисем пĕрлĕхлĕ демократилĕ фронт йалавĕ айне пухăнса пыраççĕ, фашисăма, выçлăха тата вăрçа хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешекен коммунисла партисем таврах пĕтĕçсе пĕрлешеççĕ. Фашисăма хирĕç кĕрешес ĕçре ĕçхалăх массисем Совет Сойузĕнчи халăхсен примерĕпе — болђшевикла парти тата халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе хăйсен çĕршывне социалисăмăн никам çĕмĕрейми крепăçĕ туса хунă халăхсен примерĕпе хавхаланса, вăй илсе пыраççĕ.

Испани делегацийĕ Октăбĕр уйавне иртерме килет

Испанин паттăр халăхĕн Октăбĕр уйавне ирттерме ССР Сойузне килекен делегацине илсе килекен „Сибиряков" теплоход çинчен радиограммă илнĕ. Вăл радиограммăра çапла каланă.

— Паттăр Испани халăхĕн делегачĕсем Совет Сойузне калама çук савăнса пыраççĕ. Вĕсем аслă Сталина тата Советсен çĕршывĕнчи ĕççыннисене чунтан йуратни, тав туни çинчен калаççĕ.

Делегаци составĕнче—вунпилĕк çын: рабочисем, хресченсем, интеллигенцин представителĕсем. Вĕсенчен нумайĕшĕ республика çарĕн бойеçĕсем.

(ТАСС).

Германин Америкăри шпионла центрĕн процесĕ

Њйу-ЙОРК, нойабĕрĕн 3-мĕш. Германин Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенчи шпионла центрĕн ĕçĕ пирки пыракан суд процесĕнче кăçхи ларура свидетел—Њйу-Йоркри çекретлă полици агĕнчĕ пулнă Леон Терроу кăтартса панă. Терроу Грибл шпионăн ĕçĕ пирки следстви тунă пулнă.

Хăй кăтартса панисенче Терроу çакна çирĕплетсе каланă: доктор Грибл ăна полици допрос тунă чух, айăпланакан Гофмана вĕлерессипе хăратнă, мĕншĕн тесен Гофман хăй Германин Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенчи шпионла центрĕн аркатулă ĕçĕсене хутшăннине йышăннă, çакăншăн ĕнтĕ ăна Грибл çиленнĕ. (Германин шпионла центр ĕçĕ пирки малтанхи следствине туса пĕтеричченех Грибл Германийе тухса тарнă).

Терроу çакна çирĕплетсе каланă: Грибл йапалисем хушшинче пĕчĕкçĕ спичка коробки тупнă, унăн ăшĕнче Германин шпионла центрĕн шифрĕ пулнă. Анчах, çак факт пулнă пулсан та, Грибл Гофмана вĕлеретĕп тесе йунанă пулсан та, Терроу Грибла ирĕке кăларса йанă.

„Дейли Уоркер" хаçат çапла çырат̆: Шаде свидетел: Деппе—Германи коммунисĕ, вăл Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене пурăнма куçса килнĕ,—тесе кăтартса пани тĕрĕс мар, чăннипе илсен Деппе вăл—Германин Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи шпионла центрĕн активлă членĕ.

Государствăна сĕт тăратас плана тултармала

Государствăна сĕт тăратмали срукĕсем иртсе пыраççĕ пулин те Чăваш республикĕнче сĕт тăратассине 79,7 процент çеç тултарнă. Сĕт тăратмали çулталăк планне пĕр район та тултарман.

Çу савăчĕсем илекен сĕтĕн учочĕпе отчотнăçне тĕппех пăтраштарса пĕтернĕ. Çавна пула сĕт вăрласси сарăлса кайнă. Сĕт тăратмали инструкци тăрăх çу савăчĕсен Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕсене кашни уйăхрах обйазателствăсене пурнăçа кĕртнине шута илме сĕт пыни çинчен списăксем тăратмала. Ăна çу тресчĕ пурнăçа кĕртмен, кĕртмест те. Ку вăл ĕçре пысăк чăрмав кӳрет.

Хĕрлĕ Чутайри çу савăчĕ нойабĕрĕн 20-мĕш тĕлне Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйне 122 пин литр илнĕ сĕт çинчен сведĕни тăратман. Ку савăтăн хăйма, сепаратăр пункчĕсем тата сĕт-çу пухакансем сĕт-çу илнине шута илмен. Пунктсенче ĕçлекенсем виç-тăват хут улшăннă. Çавна пула Хĕрлĕ Чутайри сепаратăр пунктĕнче сĕте кирлĕ мар çĕре салатса пĕтернĕ, айăплисене пайăн кун та ответ тыттарман-ха. Вăл пунктра обйазателствăсене пурнăçа кĕртнине шута илессине калама çук пăтраштарса пĕтернĕ. Сĕт-çу илнине шута илесси ытти хăйма тата сепаратăр пункчĕсенче те çавнашкалах. Хĕрлĕ Чутайри çу савăтĕнче çу тресчĕн работникĕсем, çав шутрах управђайушчи Комаров йулташ хăй те, темиçе хут та пулнă. Анчах вĕсем пĕри те çу савăтĕнче ĕçсене йĕркелесе йарас тесе ĕçлемен, савăтăн малтанхи директăрне Новикăва пĕр айăплăмасăрах ĕçрен кăларса çĕнĕ директăра Садовникăв йулташа лартнипех иртерсе йанă, çĕнĕ директăра нимĕнле пулăшу та паман. Çу тресчĕ ытти районсенче те çавăн пекех „йертсе пынă".

Комаров йулташ çу кăçипех çиçтемăри сăтăрлăх йулашкийĕсене пĕтерессии çинчен пакăлтатнă тата хаçатсенче çырнă. Анчах вăл çиçтемăра дисциплинăна çирĕплетме, сĕт-çува кирлĕ мар çĕре салатса йанине пĕтерме нимĕн те туман. Сĕт-çува кирлĕ мар çĕре салатнăшăн, учот ĕçне пăтраштарса пĕтернĕшĕн тата плана тултарманшăн айăплисене пĕрине те ответ тыттарман. Комаров йулташ плана тултарасси хăйĕн ĕçĕ мар пекех, вăл ĕçе Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн çиçтеми тумала пек калаçат̆. Унпа вăл çиçтемăри дисциплинăна начарлатма тата учота пăтраштарма пулăшнă. Сĕт-çу тăратас плана тултарасси пĕтĕмĕшпех хăйма пункчĕсем, сепаратăр пункчĕсем, сĕт-çу пухакансем лайăх ĕçленинчен, вĕсем сведĕнисене вăхăтра тăратнинчен тата ĕçе Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕсен агĕнчĕсемпе çыхăнса туса пынинчен килет. Çавна Комаров йулташ ăнланман,

Çу промышленнăçĕн çиçтеми государства валђи ирĕккĕн сĕт илес çулталăкри плана 34 процент çеç тултарнă. Ирĕккĕн сĕт илес ĕç тулманнишĕн айăпа Комаров йулташ никам çине те йăвантарма пултараймаст̆, мĕншĕн тесен вăл плана тултарасси пĕтĕмпех çу тресчĕн çиçтеминчен килет.

Районри организацисем те çу савăчĕсен ĕçĕсемпе интересленмен, çу савăчĕсенчи çитменлĕхсене пĕтерме тата плана тултарма нимĕнле мерă та йышăнман.

Пур общĕствăлă организацисен те çу промыслин ĕçĕсем çине çавăрăнса пăхмала, çитменлĕхсене пĕтермеле, парса татман хуçалăхсенчен сĕт-çу пухса çитермеле.

Йефимăв.

Йединоличниксен хуçалăхĕсенчи лашасене обйазателнăй йĕркепе окладлă страховани тунăшăн тӳлемели тарифлă ставкăсене улăштарасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти октăбĕрĕн 7-мĕшĕнче йышăннă 1078-мĕш № постановлени тăрăх тата Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти ийунĕн 11-мĕшĕнче „Чăваш АСС Республикĕн йалти выранĕсенче тата хуласенче обйазателнă йĕркепе окладлă страховани тăвасси çинчен" йышăннă постановленин II-мĕш уйрăмри 5-мĕш статйан „Г" пунктне улăштарса Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат̆:

1. Йединоличниксен хуçалăхĕсенчи икĕ çултан иртнĕ тата кунтан ытларах çулхи лашасемшĕн окладлă страховани тӳлевĕн тарифлă ставкине лашана çулталăклăха страхланă укçа хисепĕнчен 100 тенкĕ пуçне 14 тенкĕ те 50 пус тăвас.

2. Финанс Халăх Комиссариатне тата Госстрах управленине кăçалхи нойабĕрĕн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр хушса памали страховани тӳлевĕсене шутласа пĕтерме тата тӳлевсен пĕлтерĕвĕсене алла пама хушас.

3. Хушса панă страховани тӳлевĕсене пĕтĕмĕшпех тӳлесе татмали срука 1938 çулти декабĕрĕн 1-мĕшне тăвас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател заместителĕ— А. СОМĂВ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене тăваканĕшĕн—В. ЛЕБЕДĔВ

1938 ç. октăбĕрĕн 26-мĕш.

Швеци Совет Сойузне саламлат̆

Швецири профсойузлă, кулђтурăлă тата политикăлă организацисем (пурĕ 200 организацине йахăн; вĕсенче пурĕ çĕр пин член ытла пĕрлешсе тăрат̆) Октăбĕрти Аслă револђуци XXI çул тултарнă май, Совет халăхĕ патне коллективлă салам йанă. „Епĕр Совет Сойузĕн хăватĕнче,—тенĕ саламра,—социалисăм пĕтĕм тĕнчипех çĕнтерессине курса тăратпăр".

Нойабĕрĕн 2-мĕшĕнче ССР Сойузĕн çитĕнĕвĕсемпе паллашма Совет Сойузне килме Стокголђмран 8 делегат тухнă. Вĕсене Швецири профсойузсен 25 пин членĕ суйласа йанă.

(ТАСС).

М А Л А Л И.

Кĕске вывăдсем

1917 çулти феврал̆тен октăбĕрĕ çитиччĕнхи сакăр уйăх хушши тăрăшĕнче болђшевиксен партийĕ йăвăртан та йăвăр задача пурнăçлат̆: вăл рабочи клас хушшинче, Советсенче ытларахăш пысăк пайа кĕрешсе илет, вăл мĕлйуншар хресченсене социалисăмлă револђуци йенне çавăрат̆. Вăл çак массăсене вакбуржуалă партисен (есерсен, меңшевиксен, анархиссен) влийанинчен туртса илет, вăл утăм хыççăн утăм çак партисен ĕççыннисене хирĕçле политикине тăрă шыв çине кăларса пырат̆. Болђшевиксен партийĕ фронтра та, тылра та, массăсене Октăбĕрти Социалисăмлă револђуцине хатĕрлесе, политикăлă пысăк ĕç сарса йарат̆.

Парти историйĕнчи çак тапхăрти ĕçе татса паракан самантсем: Ленин емиграцирен таврăнни, Ленинăн Апрелри тезисĕсем, партин Апрелри конференцийĕ тата партин VI-мĕш сйесĕ. Парти решенийĕсенче рабочи клас çĕнтерме вăй, шанăç илнĕ, револђуцин кирлĕрен те кирлĕ ыйтăвĕсем тăрăх ответ тупнă. Апрелри конференци партине буржуалă-демократилĕ револђуцирен социалисăмлă револђуцине куçассишĕн кĕрешмели çул çине тăратат̆. Партин VI-мĕш сйесĕ партине буржуазипе унăн Вăхăтлăх правителствине хирĕç хĕçпăшаллă восстани тума тĕллесе йарат̆.

Есерсемпе меңшевиксен соглашателле партийĕсем, анархиссем тата ытти коммунисла мар партисем хăйсен аталанăвне вĕçлесе çитереççĕ: вĕсем пурте Октăбĕр револђуци тĕлнех буржуалă партисем, капиталисăмла стройа тĕкĕнмесĕр сыхă хăварассишĕн тăракан партисем пулса тăнă. Болђшевиксен партийĕ буржуазине сирпĕтсе пăрахса Советсен влаçĕ туса хурассишĕн массăсен кĕрешĕвне пĕр-пĕччен йертсе пынă.

Çакăнпа пĕрлех болђшевиксем парти ăшĕнчи капитулђантсем Зиновйĕв, Камĕнĕв, Рыкăв, Бухарин, Троцкий, Пйатаков партине социалисăмлă револђуци çулĕ çинчен пăрса йама хăтланнине çĕмĕрсе тăкаççĕ.

Болђшевиксен партийĕ йертсе пыракан рабочи клас, чухăн хресченсемпе сойуз тытса, салтаксемпе матроссем пулăшнипе буржуази влаçне сирпĕтсе пăрахат̆, Советсен влаçĕ туса хурат̆, çĕнĕ сăнарлă государства—социалисăмла совет государстви—туса хурат̆, çĕр помешчиксен харпăрлăхĕ пулассине пăрахăçа кăларат̆, çĕре усă курма хресченсене парат̆, çĕршыври пĕтĕм çĕрсене национализацилет, капиталиссене експроприацилет, вăрçăран туха ссине—мире кĕрешсе илет, сывлăша çавăрттарса йама кирлĕ вăхăт илет, çапла вара, социалисăм строителствине сарса йама кирлĕ условисем туса хурат̆.

Октăбĕрти Социалисăмлă револђуци капиталисăма çĕмĕрсе тăкрĕ, буржуазирен производства хатĕрĕсене туртса илчĕ, хапрăксене, савăтсене, çĕре, чукунçулсене, банксене пĕтĕм халăх харпăрлăхĕ, общĕствăлă харпарлăх туса хучĕ.

Вăл пролетариат диктатури туса хучĕ, пысăк государствăна йертсе пырас ĕçе рабочи класа пачĕ, çапла вара ăна пуçпулса тăракан клас туса хучĕ.

Çак майпа вара Октăбĕр револђуцийĕ етем историнче çĕнĕ самана—пролетарилĕ револђуцисен самани уçса пачĕ.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Испанири фронтсенче

(ТАСС Парижран пĕлтернисем тăрăх)

Хĕвелтухăç фрончĕ

Испанин оборона министерствин официаллă сводкинче кăтартнă тăрăх, нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче пăлхавçăсем авиаципе артиллери пулăшнипе республиканĕçсен Сиерра Пандолђс районĕнчи позицийĕсене атакăланă. Пăлхавçăсем малтанласа икĕ высотана йышăнса илме пултарнă. Анчах та хирĕç вăйлă контратака туса республиканĕçсем пăлхавçăсене çав высотасенчен пĕринчен хăваласа йанă. Республиканĕçсем тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ.

Республиканĕçсен авиацийĕ ăнăçлă ĕçленĕ. Республика истребителĕсен çичĕ ескадрилђйи фашиссен самолђочĕсемпе тытăçса кайнă, тытăçу 30 минут ытла пынă. Фашиссен самолђочĕсен хисепĕ республиканĕçсен самолђочĕсен хисепĕнчен чылай пысăк пулнă. Çак çапăçура республика лђотчикĕсем Италин 8 „Фиатне" персе антарнă. Икĕ „Фиат" Фатарелйе районĕнче, виççĕмĕшĕ — Гандесăран кăнтăрхĕвелтухăçнеле, тăваттăмĕшĕ—Корбер таврашне ӳкнĕ. Фашиссен тăватă самолђочĕ Фатарелйе тăвĕсем çине ӳксе ванса пĕтнĕ. Республиканĕçсем икĕ самолот çухатнă.

16 сехет те 30 минутра сывлăшра çĕнĕ çапăçу пулса иртнĕ, ку çапăçура Италин пĕр „Фиатне„ тата Германин пĕр „Мссершмидтне" персе антарнă. Германи самолочĕн пилочĕ парашӳтпа анса çăлăннă. Республиканĕçсем пĕр самолђот та çухатман.

Центрти фронт

Фронтра йăланхи пекех пăшалсемпе тата пулеметсемпе хире-хирĕç перкелешеççĕ. Фронт линийĕ малтанхи пекех.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

Нойабĕрĕн 1-мĕшĕн ирхине Италин вунă самолђочĕ Барселонă порчĕ çине тата йунашар кварталсем çине бомбăсем пăрахнă. Темиçе çурта ишĕлтернĕ. Граждăнла халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур.

Таррагон (Барселонăран кăнтăр йенче) хули çине те Итали самолђочĕсем çавăн пекех бомбăсем пăрахнă. Вилнĕ çынсем пур.

Çав кун 8 сехетре каçхине фашиссен пилĕк самолђочĕ Барселона сывăхĕнчи Бадалон, Санта Колома, Монгат тата Виласар йалĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Миçе çынна вĕлернипе амантни халĕ паллă мар-ха.

Çĕмĕрле аслă уйав умĕн

ÇĔМĔРЛЕ, (хамăр корр.). Йулашки кунсенче предприйатисенче Октăбĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăрту татах анлăраххăн сарăлса пыни палăрат̆. Кашни рабочи, бригадă, цех уйава ĕçре çĕнĕ ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешет. Комбинатри авса пукансем тăвакан цех (цех начальникĕ комсомолеç Н. Мосолов йулташ) октăбĕрĕн 30-мĕшĕнче плана 167,1 процент тултарса çĕнĕ çĕнтерӳ турĕ. Цех кашни кун плана ытлашшипех тултарса пырат̆. Малта пыракан стаханăвĕçсем: Дерйабин тата Сычĕв йулташсем йалан нормăна 200—250 процентшар, Киçелђовă, Сурковă тата Лихутин йулташсем 150 процентшар тултарса пыраççĕ. Цех коллективĕ плана тултарас ĕçре мала тухса демонстрацире малти колоннăра пырассишĕн пысăк хастарлăхпа ĕçлет.

„Болђшевик" савăт екстракт промышленнăçĕнчи хапрăк маркишĕн кĕрешет. Ку тĕлĕшпе кашни цех ăмăртăва хутшăннă. Ăмăртура уйрăмăнах рубилђщиксем паха примерсем кăтартаççĕ. Акă, Йемелин, Йегорăв, Сулимăв, Орлов йулташсем кашни кунах 25 кубла метр вутă ваклас выранне 35—45 кубла метршар ваклаççĕ. Выгрузчиксемпе диффузорщиксем те плана ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Сталинла пилĕкçуллăхсенче ӳссе çитĕннĕ хула ĕççыннисен чаплă уйавне производствăра тата кулђтурăпа йала строителствинче çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илет.

ХАР. ЛИСИН.

Строителствăна пулăшма

Канаш—Шупашкар чукунçулне хăвăртрах туса пĕтерес тесе, комсомолĕçсем хăйсен ирĕкĕпе чукунçул строителствине ĕçлеме кайаççĕ. Шупашкар хулинчен çеç унта 100 ытла комсомолĕç кайнă.

Нойабĕрĕн 2-мĕшĕнче, чукунçул строителствине Сĕнтĕрвăрринчи комсомолĕçсен бригади тухса кайнă. Бригадăра 11 çын.

Çула май бригадă Шупашкара кĕрсе тухрĕ. Строителствă управленийĕ çак бригадăна çĕнĕрен уçăлакан Çĕрпӳ карйерĕ çине ĕçлеме йачĕ.

Ал. Смышлђайĕв.

Догăвăра пурнăçлат̆

КУСЛАВККА. Комбинатри Н. Илйин йулташ сменинче ĕçлекенсем каскалакан цехри В. Илйин йулташ йертсе пыракан сменăпа ăмăртса ĕçлеççĕ. Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă май вĕсем хăйсем çине кулленех ĕç нормине 110 процентран кайа мар тултарса ĕçлеме, простой, брак пулассине пачах пĕтерме обйазателства илнĕччĕ. Ăмăрту догăвăрĕсене тĕрĕслесе пăхнă хыççăн Н. Илйин йулташ смени малта пыни курăнат̆. Сменă вăтамран шутласан кашни кунах плана 110 процент ытла тултарса ĕçлет.

Г. Кузнецов.

Уйăх планне ытлашшипех тултарнă

Октăбĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва рабочисем хушшинче анлăн сарса, Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тирсăран савăчĕ октăбĕр уйăх планне урана тăхăнмалисем çĕлессипе 103,4 процент, тир-сăран цехĕ—111,2 процент тултарнă.

Закройнăй цехра пайанхи куна 16 стаханăвĕç, нормăна тултарайманнисем çук. Закройщицă М. Йефимăвă нормăна йаланах 216 процент, А. Павлăв чуйак тĕпне çĕлессипе 150—160 процент, штамповщицăсем И. Каракулăвăпа Н. Ивановă 170 процентшар тултарса пыраççĕ. Крупскайа йачĕпе тăракан бригадă та (бригадирĕ Воробйовă йулташ) октăбĕр уйăх планне 101 процент тултарнă. Воробйовă хăй уйăх нормине 126 процент пурнăçланă.

Халĕ савăтра Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту догăвăрĕсене тĕрĕслесси пырат̆.

ТИК.

Радио кĕртнĕ

ВĂРМАР. „Арабуç" колхоз членĕсем республикăри пур колхозниксем пекех Октăбĕр уйавне йалхуçалăх çулне вĕçлесе çитернипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхоз государства умĕнчи парăмсене парса татнă. Кĕрхи çĕртме сухине пĕтĕмпех туса çитернĕ. Çак кунсенче йалсовечĕ радио кĕртсе пачĕ.

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейĕçсен Депутачĕсен Шупашкар хула совечĕн парти, совет, комсомол тата профсойуз организацисемпе пĕрле Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револђуци XXI çул тултарнă йатпа пулакан савăнăçлă пленумĕ çак çулти нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, кино-театр çуртĕнче уçăлат̆.

Пленума чĕнӳ билечĕпе кĕртеççĕ.

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейĕçсен Депутачĕсен Шупашкар хула совечĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи физкулђтурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕн

СНАБЖЕНИ ПАЙĔ ПĔТЕТ

Снабжени пайне претензисем пур пулсан, вĕсене ликвидком çак çулти нойабĕрĕн 15-мĕшĕнчен йышăнат̆.

Çак срук хыççăн претензисене йышăнмаççĕ.

Ликвидком.

Гидроузелăн инженерла-геологилĕ партине

ЙАЛАНЛĂХА ĔÇЛЕМЕ

плановик, машинистка, платниксем тата охраниксем

кирлĕ.

Адрес: ул. Кадыкова, д. № 6/2, телефон 7—44.

Уполномоченный Чувашглавлита № 561 Гор. Чебоксары, типография № 1 Мест прома ЧАССР, заказ № 832,ф. 6. 58 Х 84 п. л.